…ИОТЕКА им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Декабрь
5
ШĂМАТКУН
№ 237 (9146)
Хакĕ 20 пус.
38-мĕш çул тухать.

Паян—ССР Союзĕн Конституци кунĕ.

Сывă пултăр Аслă Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ—пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕпе мухтавĕн никĕсĕ, пĕтĕм тĕнчери мирĕн никам аркатайми çирĕп терекĕ!

Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Конституци кунĕ

Паян совет халăхĕ ССР Союзĕн Конституци кунне савăнăçлăн уявлать. Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайнăй VIII-мĕш съезчĕ Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн çĕнĕ Конституцине (Тĕп Законне) йышăннăранпа 17 çул иртрĕ. Çак иртнĕ вăхăт хушшинче пирĕн халăх, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ ăслă ертсе пынипе, мирлĕ ĕçре, Аслă Отечественнăй вăрçă хирĕсенче. çавăн пекех вăрçă хыççăнхи вăхăтра та пĕтĕм тĕнче историйĕнче пулăрса тăракан чаплă çĕнтерÿсем турĕ.

Пирĕн Конституци—социализм çĕнтернĕ, демократи чи анлăн пурнăçланса пыракан çĕршывăн конституцийĕ. Вăл Совет Союзĕнче социализм тунине, социализмран майĕпен коммунизма куçмалли тапхăра кĕнине законпа çирĕплетсе хунă. Çĕршыва индустриализацилемелли, ялхуçалăхне коллективизацилемелли политикăна пурнăçланипе çĕнĕ экономика, план тăрăх пĕрмаях аталанса пыракан, кризиссемпе ĕçсĕрлĕхе пĕлмен, халăха пуян та культурăллă пурăнма май паракан экономика пулса çирĕпленнĕ.

Хуçалăхра пысăк улшăнусем пулнă май совет обществин класлă структури те тĕпренех улшăнчĕ. Эксплуататорла классене, çынна çын эксплуатацилессине ĕмĕрлĕхех тĕп тунă. Пирĕн çĕршывра икĕ класс пур—рабочисен класĕ тата хресченсен класĕ, вĕсем, çĕршыв хуçисем пулса, пĕр-пĕрне туслă пурăнаççĕ. Çавăн пекех пирĕн çĕршывра çĕнĕ интеллигенци—совет интеллигенцийĕ пулса тăчĕ, вăл пĕтĕм халăхшăн ĕçлет. Социализм вăхăтĕнче рабочисемпе хресченсен союзĕ тата ытларах çирĕпленчĕ, совет обществин моралĕ-политикăлла пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ.

Совет Союзĕн Конституцийĕнче социализмăн тĕп принципĕсене çырса хунă. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем ССР Союзĕн политикăлла никĕсĕ пулса тăраççĕ, вĕсем помещиксемпе капиталистсен влаçĕсе антарнипе тата пролетариат …ри çĕнтерсе илнипе ÿссе çирĕп… Хуçалăхăн социализмла системи …оизводство орудийĕсемпе хатĕрĕ… …иализмла харпăрлăхĕ ССР Союзĕн …кăлла никĕсĕ пулса тăраççĕ. Çĕр… социализм принципĕ: «кашниннчен …ултарулăхне кура, кашнине—унăн …ура» текен принцип пурнăçа кĕрсе …

…ет государствинче пĕтĕм власть ĕç… депутачĕсен Совечĕсем урлă хула… ĕççыннисен аллинче тăрать. Госу… …лна тытса тăрас ĕçе—ĕççыннисем …анлăн тата активлăн хутшăнаççĕ. Советсенче те—выранти Советсенчен …ССР Союзĕн Верховнăй Советне …ченех—пурне те тивĕç, пĕр тан та… …рех суйламалли правăпа вăрттăн са… …суйланă депутатсем ĕçлеççĕ Со… …яланхи комиссийĕсенче, çавăн пе… тата обществăлла организацисенче …-вуншар миллион çын хутшăнса …ĕ Пирĕн совет государствинче пĕ… …ĕçсене халăх интересĕсене, халăх …ĕне малалла хайăхлатса пырассине …ирăна хурса туса пыраççĕ.

…питализмла çĕршывсене илес пулсан, …пĕтĕмпех урăхла картина. Унта …р пурлăхсене. влаçа буржуази хай… …че тытса тăрать. Буржуалла госу… …на буржуази интересĕсене сыхлать, …нисене пусарать, хĕсĕрлет. Капитал …улса тăракан çĕршывсенче демокра… …ичен калаçни ĕççыннисене улталани …тлать, мĕншĕн тесен власть буржуа… …инче тăнă чухне ĕçхалăхĕ демо… …иле ирĕклĕхсемпе усă курни—них… …а пулма пултараймасть. Çынсем та… …писем пĕр тан пулмалли принципа, …алла-демократилле ирĕклĕхсене бур… …и лахçăнах ура айне таптаса тăкнă. …ет Союзĕн Конституцийĕ ĕççынни… …аслă правăсем—ĕçлев прави, канăç …, вĕренÿ прави, ватăлсан е чирлесе… …пулсан пулăшу илмелли право … Çак правăсем пурте туллин пур… …са пыраççĕ. Пирĕн çĕршывра ĕç… …ĕ çук, пулма та пултараймасть. … гражданин хăй юратнă ĕçе вĕре… …заваслăнса ĕçлет, телейлĕ пурăнать. …ли кашни çын суллен тÿлевлĕ …уск илет. Санаторисем, канмалли …сем, шкулсем—пурте ĕççыннисемшĕн. …лнă çынсен те пирĕн çĕршывра …ни кунĕшĕн шиклемесĕр пурăнаççĕ. …шĕн, хăйсен ывăлĕсемпе хĕрĕсемсĕр …е, государство тăрăшать. Совет сын… …çамах ирĕклĕхĕпе, пичет ирĕклĕхĕ…е, пухусемпе митингсем тумалли ирĕклĕхсемпе анлăн усă кураççĕ.

Пирĕн аслă Совет Союзĕ халăхсем туслă, пĕр-пĕрине килĕштерсе пурăннине кăтартса паракан ырă тĕслĕх пулса тăрать. Социализм çĕнтернĕ çĕршывра пур халăхсем те пĕр тан правасемпе усă кураççĕ. Социализм тапхăрĕнче, аслă вырăс халăхĕ куллен пулăшса пынипе, пур халăхсем те. вăл шутра пирĕн чăваш халăхĕ те, чечекленсе ÿссе аталанчĕç. Халăхсен туслăхĕ—пирĕн государство тĕрекĕн хăватлă çăлкуçĕсенчен пĕри.

ССР Союзĕн Конституцийĕ, граждансене аслă правасемпе ирĕклĕхсем панипе пĕрлех, вĕсен тĕп обязанноçĕсене те кăтартса парать. Конституцире каланă тăрăх, кашни гражданинăн законсене пурнăçа кĕртсе пымалла, ĕç дисциплинине çирĕп пăхăнмалла, хăйĕн ĕç вырăнĕнче—предприятире, колхозра, учрежденире тата ытти ĕçре те—тÿрĕ кăмăлпа ĕçлемелле, социализмла харпăрлăха упрамалла, Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр пулмалла. Граждансем пурте хăйсен çак тĕп обязанноçĕсене пурнăçласа пынинчен пирĕн государство хăватлă пулассипи, халăх пурнăçĕ малалла лайăхланса пырасси килет.

Конституци кунне паллă тунă май совет çыннисем ĕçри çитĕнÿсене пăхса тухаççĕ тата малашнехи задачăсене пурнăçлассишĕн çĕнĕ хăватпа ĕçлеме хатĕр тăнине палăртаççĕ. Совет çĕршывĕн социализмла хуçалăхĕ ÿсĕм çулĕпе хăварт аталанса пырать, çак никĕс çинче халăх пурнăçĕ пĕрмаях лайăхланать. Совет правительствипе Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ. йывăр промышленноçа аталантарас ĕçре тунă çитĕнÿсем çине таянса, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне тата ялхуçалăхне çывăх вăхăтрах хăвăрт аталантарма, çапла вара халăх пурнăçне тата ытларах лайăхлатма задача кăларса тăратрĕç. Çак пархатарлă задачăна пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн задачи тесе йышăнчĕ.

Халăх пурнăçне ик-виçĕ çул хушшинчех нумай лайăхлатмалли пысăк задачăна пурнăçлама кашни предприяти, кашни колхоз, совхоз, МТС хăйсен ĕçне кăтартуллă туса пымалла. Шупашкарти электроаппаратура завочĕ, лента тĕртекен фабрика, республикăри тата ытти хăшпĕр предприятисем Конституци кунне çулталăкри плана пурнăçланипе кĕтсе илчĕç. Пилĕк çуллăх плана, çавăн пекех кăçалхи плана тултарассишĕн тата иртсе тултарассишĕн кашни предприятире социализмла ăмăртăва анлăн сарса пырас пулать. Колхозсенче ситес çуракине кăтартуллă хатĕрленсе çитессишĕн, тырпул тухăçлăхне малалла ÿстерме мĕн кирлине пĕтĕмпех тăвассишĕн, выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарассишĕн, унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе ĕçлекен совет халăхĕ умра тăракан мĕнпур задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырĕ.

Телейлĕ совет çыннисем, ССР Союзĕн Конституцийĕ панă аслă правасемпе усă курса, коммунизмла общество тăвассишĕн пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ Совет Конституцийĕ халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисене социализм тăвассишĕн хастарлă кĕрешме хавхалантарать. Капитализмлă çĕршывсенчи ырă кăмăллă çынсене Совет Конституцийĕ миршĕн, социализмшăн. демократишĕн кĕрешме хăват парать; унти, капитализмла çĕршывсенчи, ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи ĕççыннисен пурнăçне курса. капитализм пусмăрĕнчен хăтăлассишĕн кĕрешессине вăйлатса пыраççĕ Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнче пурнăçланине тĕнчери ытти мĕнпур çĕршывсенче те пурнăçлама пулать,—акă мĕн çинчен калать Совет Конституцийĕ капитализмла çĕршывсенчи ĕççыннисене.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем тума вăй хурса ĕçлет. КПСС XIX-мĕш съезчĕн, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене, Совет правительствипе партин Центральнăй Комитечĕ юлашки вăхăтра йышăннă решенисене пурнăçласа. промышленноçпа ялхуçалăхне тата культурăна çĕнĕ хăватпа вăйлатса, ÿстерсе пырар.

ССР Союзĕн Конституци ялавĕпе, Коммунистсен аслă партийĕ ертсе пынипе пирĕн халăх коммунизм обществи тумалли çулпа çирĕппĕн малалла утать.

И. Ганф художник плакачĕ. Государствăн изобразительнăй искусствăсен издательстви пичетлесе кăларнă. (ТАСС фотохроники).

Электроаппаратура завочĕ çулталăкри плана тултарчĕ

Шупашкарти электроаппаратура завочĕн коллективĕ 1953 çулхи производство планне СССР Конституци кунĕ тĕлне тултарма сăмах панăччĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх пурнăçне татăклăн лайăхлатма йышăннă постановленисемпе хавхаланса, халиччен пулман хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Цехсем, сменăсем, бригадăсем талăкри графика, вунăкунлăхри заданисене иртерсе тултарассишĕн, производствăна лайăхрах организацилессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн ăмăртаççĕ.

Завод ĕçĕнче материалсем кÿрсе килес, кăткăс оборудовани туса кăларас тĕлĕшпе йывăрлăхсемпе чăрмавсем сахал мар пулчĕç, хуари электростанцисем электроэнерги çителĕклĕ парса тăраймарĕç. Анчах завод коллективĕ çавăн пек кăлтăксемпе чăрмавсене ăнăçлă пĕтерсе пырать.

Мĕнпур цехсемпе участоксем иртнĕ уйăхри задание иртерсе пурнăçларĕç, завод продукци туса кăлармалли уйăхри плана çирĕплетнĕ номенклатура тăрăх 113.9 процент тултарчĕ.

Уйрăмах виççĕмĕш сборочнăй цех коллективĕ пĕр тикĕс, кулленхи график тăрăх ĕçленине палăртас пулать. Цех плана çирĕплетнĕ номенклатурăпа ассортимент тăрăх чылай иртерсе тултарчĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш сборочнăй цехсем те паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Иртнĕ вăхăтра штамповочнăй цехпа пĕрремĕш изоляционнăй цех ÿлса пыратчĕç, сборочнăй цехсене ĕçлеме чăрмантаратчĕç. Социализмла ăмăрту сарăлни, пуян техникăна туллин усă курни, технологи процесне çĕнетсе йĕркелени ку цехсен ĕçне нумай лайăхлатма май пачĕ. Халĕ çак цехсем детальсене график тăрăх туса кăларма тытăнчĕç.

Пĕтĕм коллектив пусăруллă та пултаруллă ĕçленипе завод продукци туса кăлармалли 1953 çулхи плана обязательствăра палăртнă срокран маларах, ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Çулталăк вĕçлениччен завод халăх хуçалăхне планран иртерсе чылай электроаппаратура парать.

Социализмла ялхуçалăхне малалла аталантарма пулăшас тесе, завод коллективĕ, çĕршыври малта пыракан предприятисен примерĕпе, Шупашкар районĕнчи шефа илнĕ Ильич ячĕпе тăракан колхоз валли теплица туса хатĕрлеме пулчĕ. Пывăç япаласем тăвакан цех теплица деталĕсене тума тытăнчĕ. Шеф ĕçне туса пыма ятарласа комисси уйăрнă Вăл колхоз правленийĕпе тачă çыхăну тытать. Заводри специалистсем колхозра час-часах пулаççĕ. Весем колхоз правленийĕпе пĕрле теплица никĕсне хывма тата котельнăй лартма хатĕрленеççĕ.

Хулари советла суту-илĕве хăвăртрах лайăхлатма пулăшас тесе, апир строительствăпа монтаж управленийĕпе пĕрле, 20 кварталĕ çĕнĕ сутра апат-çимĕç тата атă-пушмак сутакан магазинсем уçма, вĕсем валли оборудованипе тĕрлĕ хатĕрсем туса пама йышăнтăмăр.

Çак уйăхра завод умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Производство планне ăнăçлă тултарнипе пĕрлех пурăнмалли икĕ сурт туса пĕтермелле, çĕнĕ йышши кăткăс аппаратсем туса кăларма хăнăхса çитмелле, 1954 çулхи пысăкланă плана тултарма тимлĕ хатĕрленмелле.

СССР Электростанцисемпе электропромышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисем хушшинчи социализмла ăмăртура пирĕн завод 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталтан пуçласа малти вырăнта пырать, СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытать. Умра тăракан задачăсене завод коллективĕ малашне те ăнăçлă пурнăçласа пырĕ.

М. АРДАМАТСКИЙ,
Шупашкарти электроаппаратура тăвакан завод директорĕ,

Мускав çĕршыва саламлать

Мускав тÿпине çĕкленет кăвак шуçăм,
Хавас кун сутти таврана сарăлать
Совет ĕççыннийĕн телейлĕх çăлкуçĕ —
Тăван тĕп хула çĕршыва саламлать.

Мускав ялкăшать. çĕкленет пур тавралăх,
Хавасла вĕрет, туйăма вăратать.
Маттур çĕнтерÿçĕ—нумай тĕрлĕ халăх
Пиншер стройкăра ĕç юрри шăрантать.

Вĕçет мирлĕ юрă хирсем, сăртсем урлă.
Пире аслă çул хывса пачĕ Мускав.
Телейлĕ те ирĕк хаваслă кун-çулшăн
Сана, хурçă парти, хисеп те мухтав!

Çемье пирĕн çирĕп, ĕçре пурте паттăр:
Пире тăван парти куллен вăй парать.
Эпир коммунизм, ыр пурнăç тăватпăр,
Эпир тытăнсан—аслă ту таппанать.

Донпа Атăла ĕмĕре тăванлатнă,
Шавлаççĕ çеçенхирсенче тинĕссем.
Çиçет мир ялавĕ мăнаçлăн, хăватлăн —
Курать сут тĕнче пирĕн ĕç çĕнессе.

Вĕçет мирлĕ юрă хирсем, сăртсем урлă
Пире аслă çул хывса пачĕ Мускав
Телейлĕ те ирĕк, хаваслă кун-çулшăн
Сана, хурçă парти, хисеп те мухтав!

Николай НИКИТИН.

Планран иртерсе—продукци

Шупашкарти лента тĕртекен фабрика продукци туса кăлармалли çулталăкри плана ноябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Çĕнĕ çулччен планран иртерсе продукци чылай туса кăларатпăр.

Кăçал фабрика продукцин хăйне ларакан хакне 10,2 процент йÿнетрĕ, 260 центнер çип перекетлерĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхĕ 32 процент ÿснĕ.

СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерстви фабрика иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталсенче лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Нумай рабочисем çулталăкри ĕç нормине сентябрьпе октябрь уйăхĕсенчех тултарчĕç. Социализмла ăмăртура уйрăмах комсомолкăсем Е. Николаева, Ю. Дмитриева, Н. Егорова, Н. Улыбина юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Виççĕмĕш кварталти ĕç итогĕсем тăрăх, министерство мастер помощникĕ Б. Ширбунов коммунист ертсе пыракан бригадăна «Пысăк пахалăхлă тата тухăçлă ĕçлекен бригада» ятне памалла тунă. Çак бригада кварталти задание 108 процент тултарчĕ, 96 процент вырăнне пĕрремĕш сорт продукци 98,7 процент туса кăларчĕ, продукцин хăйне ларакан хакне чылай йÿнетрĕ.

Н. БАЙКОВ,
фабрика директорĕ.

Крахмал ытларах туса кăларассишĕн

БРАСНОАРМЕЙСКИ. (Хамăр корр.). «Большевик» завод коллективĕ кăçалхи çĕрулмифен крахмал тумалли плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне иртерсе тултарчĕ. Халĕ 1954 çул шучĕпе продукци туса кăларать. Конституци кунĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, рабочисен ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Кашни сменă малтанхи вăхăтринчен 1—2 тонна ытларах продукци туса кăларать. Ф. Осипова мастер ертсе пыракан смена уйрăмах пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Заводра чи лайăх сортлă крахмал мĕнпур продукцин 85 процентĕ чухлĕ тухать пулсан, çак бригада 90 процент ытла туса кăларать.

Çĕршыва планран иртерсе крахмал туса парас тесе, çĕрулми сутăн илмелли плана икĕ хут иртерсе тултарнă.

Рабочисем çĕнĕ çул тĕлне планран иртерсе 200 тонна крахмал туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ.

Вăрманпромхоз коллективĕн çитĕнĕвĕ

Вырăнти тата топливо промышленность министерствин Парачкаври вăрманпромхозĕ ĕçе юрăхлă йывăç хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли çулталăкри плана ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне иртерсе тултарчĕ. Пухса хатĕрлемелли плана тултарнă, çуррине турттарса кăларнă. Вăрманпромхоз халăха кирлĕ таварсем 50 пин тенкĕлĕх ытла туса кăларнă. Ку вăл çулталăкри плана иртерсе тултарнине пĕлтерет.

Вăрманпромхоз коллективĕ çулталăк вĕçлениччен тата 500 фестметр йывăç касма, хатĕрленĕ вутта декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех турттарса … туса …

Р. ТОНЫШЕВ.

Парник рамисем тăваççĕ

«Чувашлесрев» треста пăхăнса тăракан Долгополянăри хăма суракан заводĕ Мускав облаçĕнчи колхозсем валли 8.500 парник рами тума заказ панă. Çак заказа чысла пурнăçласси шĕн цехсем, бригадăсем, уйрăм рабочисем хушшинче социализмла ăмăрту анлă сарăлнă. Савнă май завод 13.800 рама туса кăларнă, чылайăшне ăсатнă та ĕнтĕ.

Халĕ завод колхозсем валли вĕсне комплекчĕсем тăвать.

К. МАТВЕЕВ.

Çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕç

Чăвашкниготорг коллективĕ совет халăхĕн пысăк уявне—СССР Конституци кунне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕ. Книготорг магазинĕнче ĕçлекенсем таран сутмалли çулталăкри плана … … тултарчĕç.

Социализмла ăмăртура Вăрнарти, Йĕпреçри, Хĕрлĕ Чутайри, Сĕнтĕрти, Шăхаçанти тата Çĕмĕрлери книготорг магазинĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем … малашне кунĕсенче тавар сутмалли плана иртерсе тултарнă.

Н. ПАВЛОВ.

ССР Союзĕн Конституци кунĕ ячĕпе Шупашкарта пулнă савăнăçлă лару

Декабрĕн 4-мĕшĕнче каçхине Шупашкарта, Чăвашсен государство академи театрĕнче СССР Конституци кунне уявланă май хула Совечĕн савăнăçлă ларăвĕ пулчĕ.

Ларăва СССР, РСФСР Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем, Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем, партипе тата обществăлла организацисен представителĕсем, предприятисенпе учрежденисенчи ĕçре палăрнă … инженерсем, техниксем, служащисем, хула çывăхĕнчи ялхуçалăх артелĕсенче малта пыракан ĕçченсем тата ытти колхозниксем, учительсем, врачсем, литературăпа искусство работникĕсем пухăнчĕç.

Ларура СССР Конституци кунĕ çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕн заместителĕ З. Я. Митьков юлташ доклад туса пачĕ.

…

Ялхуçалăх механизаторĕсем вĕренеççĕ

ЯРОСЛАВЛЬ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Мологски МТС-ĕнчи мĕнпур рабочисем, специалистсемпе служащисем хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстереççĕ. 32 çын трактористсен курсĕнче тата ялхуçалăх механизаци училищинче вĕренет. Ытти работниксем семинарта ялхуçалăхĕн çĕнĕ техникине, малта пыракан ĕç меслетне вĕренеççĕ.

Юлашки вăхăтра МТС хăватлă тракторсем, çĕрулми лартмалли çĕнĕ йышши машинăсем, пропашной культурăсен речĕсен хушшине кăпкалатма культиваторсем, мелиораци ĕçĕсем тума механизмсем илнĕ. Семинара хутшăнакансем çĕнĕ машинăсене кашнине тĕплĕн вĕренеççĕ.

Мологски МТС-ĕнчи специалистсенчен чылайăшĕ институтсенче заочно вĕренеççĕ. А. Капустина агроном К. А. Тимирязев ячĕпе тăракан Ялхуçалăх академийĕнче заочно вĕренет.

Машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем пурте ик-виçĕ профессие пĕлеççĕ. Халĕ вĕсенчен нумайăшĕ строитель специальноçне вĕренеççĕ. Çакă вăл МТС-а выльăх витисем лартас ĕçре колхозсене пулăшма май парать.

Механизаторсен пĕлĕвне ÿстерме пур условисем те туса панă. МТС-ра библиотека пур, унта политика, ялхуçалăхĕпе техника ыйтăвĕсемпе кăларнă кĕнекесем нумай. Хĕрлĕ кĕтесре—техникăлла журналсем, нагляднăй пособисем. Станцире ĕçлекенсенчен нумайăшĕн хăйсен библиотекăсем пур. Кăçалхипе танлаштарсан, 1954 çулта пилĕк хут нумайрах хаçат-журнал илсе тăма тытăнаççĕ. Халиччен «Машинно-тракторная станция» журнала виçĕ çын кăна çырăнса илнĕ пулнă, халĕ 24 çын çырăннă. «Сельское хозяйство» хаçата 6 çын илсе тăнă пулсан, халĕ 28 çын илсе тăма тытăнать.

Вĕренÿ механизаторсен культурăллатехникăлла тавракурăмне пысăклатать, производствăра çитĕнÿсем тума пулăшать. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем юсас тĕлĕшпе Мологски МТС-ĕ облаçра пĕрремĕш вырăн йышăнать.

ГЭС тăвакансен творчествăлла активлăхĕ

КОМСОМОЛЬСКИЙ ПОСЕЛОК (Куйбышев облаçĕ), декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Куйбышев гидроэлектростанцине тăвакансем творчествăлла активлăх палăртаççĕ. Çĕршыв хăйсене паракан чи аван техникăна питĕ лайăх вĕренсе, вĕсем ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерсе пыраççĕ.

Жигулире ĕçсем пуçланнăранпа производствăра 500 ытла изобретенипе усă курма тытăннă. Вĕсене пурнăçланипе 15 миллион тенкĕ перекетленĕ.

Строительствăра рационализаторсене ĕçлеме лайăх условисем туса панă. Кунта вĕсем валли сăнавсем тумалли мастерской йĕркеленĕ. Унта кирлĕ станоксемпе хатĕрсем пур.

Стройкăри чи лайăх рационализаторсен шутĕнче—Мокшанов мастер. Вăл çĕре пăрлаласа шăтармалли çĕнĕ меслетпе усă курма сĕннĕ. Çав меслете пурнăçлани механизмсен тухăçлăхне пилĕк хут ÿстерме, çулталăкра 100 пин тенкĕ ытла перекетлеме май парать.

Пысăк теплица

САРАТОВ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Хула çывăхĕнчи «Ударник» пахча çимĕç совхозĕнче теплицăсен комбинатне тума тытăннă. Икĕ теплицăна, хурансем лартмалли сурта туса пĕтернĕ. парниксем патне ăшă илсе пымалли трубасем хурса çитереççĕ.

Ку совхозри теплицăсен комбиначĕ çĕршыври чи пысăк комбинатсенчен пĕри пулать. Пурĕ 10 пин тăваткал метр йышăнакан 30 теплицăра хула халăхĕ валли ир ĕлкĕрекен пахча çимĕçсем ÿстерме пуçлаççĕ.

Ялхуçалăх фильмĕсене кашни колхозра кăтартаççĕ

МИНСК, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Белоруссире ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх ÿкерне фильмсене кăтартмалли фестиваль пуçланнă. Кашни районта ятарласа киноперелвижкăсем уйăрнă, вĕсем валли маршрутсем тунă. Ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх ÿкернĕ кинокартинăсене ялхуçалăх артелĕсемпе производствăлла бригадăсенче пурнинче те кăтартма палăртнă.

Халĕ çĕнĕ кинофильмсемпе киножурналсем 60 илсе пынă. Киносеанс вăхăтĕнче ялхуçалăх специалисчĕсем лекцисем, докладсемпе калаçусем иртереççĕ.

Ялхуçалăх наукин çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыраканĕсен опычĕпе паллаштаракан кинофильмсене колхозниксем питĕ те интересленсе пăхаççĕ. «Беларусьфильм» студи ÿкернĕ «Колхоз «Рассвет»» тата «На осушенных болотах» ятлă документальнăй кинокартинăсене нумай колхозниксем курнă. …

Облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи хаҫат редакторӗсен канашлӑвӗ

Ноябрӗн 19-мӗшӗнчен пуҫласа декабрӗн 2-мӗшне ҫитиччен Мускавра облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи хаҫат редакторӗсемпе ялхуҫалӑх пайӗ заведующийӗсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Канашлӑва КПСС Центральнӑй Комитечӗ пуҫтарнӑ.

Канашлу ӗҫне КПСС Центральнӑй Комитечӗн секретарӗсем Н. С. Хрущев тата П. Н. Поспелов юлташсем хутшӑннӑ.

Канашлӑва пухӑннисем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗ В. С. Кружков юлташ «КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ ялта партилле-политикӑлла ӗҫа лайӑхлатасси ҫинчен», «Правда» хаҫатӑн главнӑй редакторӗ Д. Т. Шепилов юлташ «КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ «ССР Союзӗн ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлассишӗн кӗрешес тӗлӗшпе пичет умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен», СССР Ялхуҫалӑх министрӗн заместителӗсем В. В. Мацкевич юлташ «КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе аталантарас енӗпе йышӑннӑ решенисене пурнӗҫламалли мерӑсем ҫинчен» тата П. С. Кучумов юлташ «Машина-трактор станцийӗсен ӗҫне малалла лайӑхлатмалли задачӑсем тата колхоз производствинче вӗсен рольне вӑйлатасси ҫинчен», СССР Ялхуҫалӑх министерствин главнӑй управленийӗн начальникӗ А. Х. Анастасов юлташ «ССР Союзӗнче ҫӗр намӑкӗ туса илес ӗҫ мӗнле тӑни ҫинчен тата унӑн малашлӑхӗ ҫинчен» тунӑ докладсене итлесе сӳтсе явнӑ.

Редакторсем ялхуҫалӑхне аталантарас ӗҫри паллӑрах задачӑсене хаҫат страницисенче сутатасси ҫинчен пӗр-пӗрин опычӗпе паллашнӑ. Воронеж облаҫӗнчи «Коммуна» хаҫат редакторӗ А. П. Шапошник юлташ пӗрчӗллӗ тырӑсем туса илес ыйтӑва хаҫатра мӗнле сутатни ҫинчен пӗлтернӗ. «Горьковская правда» хаҫат облаҫри промышленноҫлӑ районсенче ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ никӗҫӗсем тӑвассипе ҫыхӑнса тӑракан ыйтусене сутатни ҫинчен хаҫат редакторӗ Г. А. Бреславский юлташ доклад тунӑ. «Казахстанская правда» хаҫат редакторӗ П. П. Никитин юлташ тата «Омская правда» хаҫат редакторӗ П. Д. Фадеев юлташ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе халӗ татса памалли ыйтусене сутатни ҫинчен каласа панӑ. «Советская Кубань» хаҫат редакторӗ Д. Я. Красюк юлташ хаҫат хӑйӗн страницисенче МТС-сен ӗҫне тата уй-хир ӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе комплекслӑ майпа механизацилессине мӗнле сутатни ҫинчен каласа панӑ. КПСС Мускав Комитечӗн секретарӗ В. И. Третьякова юлташ вырӑнти пичете парти ӗҫне мӗнле сӳтсе явни ҫинчен доклад тунӑ.

Канашлӑва хутшӑннисем валли чылай лекцисем вуласа панӑ. Профессор А. Г. Лорх «Ҫӗрулмине тӑваткал тӗмӗн лартмалли агротехника ҫинчен», профессор В. И. Эдельштейн «Пахча ҫимӗҫ культурисене тӑваткал тӗмӗн лартса ӳстермелли агротехника ҫинчен», академик Н. В. Цицин «Пысӑк тухӑҫлӑ тыррӑ туса илес тӗлӗшпе совет ялхуҫалӑх наукин тата малта пыракан практика тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен» лекцисем вуласа панӑ.

Ялхуҫалӑх наукисен докторӗ С. П. Смелов лекцийӗнче колхозсемпе совхозсенче апат никӗсӗ туса хурассине лайӑхлатмалли ыйтусене сутатнӑ.

Профессор Н. Д. Матвеев, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен институт директорӗ И. М. Кузнецов, ВИСХОМ директорӗ А. С. Маят, уй-хирте кӑшман туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен институт директорӗ профессор И. И. Синягин лекцийӗсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, йӗтӗн-долгунец тухӑҫлӑхне ӳстерес, ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсене механизацилес тӗлӗшпе сыхӑннӑ пысӑк ыйтусене хускатнӑ.

Академик А. М. Панкратова «Рабочи класпа ӗҫсынни хресченӗсен ҫирӗп союзӗ ҫинчен», профессор И. Д. Лаптев «Колхозра обществӑлла интересемпе колхозниксен интересӗсене ҫыхӑнтарса пырасси ҫинчен», профессор Г. М. Гак «Халӑх массипе уйрӑм ҫынсен историри ролӗ ҫинчен», В. Г. Корионов юлташ «Тӗнчери лару-тӑру ҫинчен» лекцисем вуласа панӑ.

Хаҫатсене кирлӗ материалсем тӑратассине лайӑхлатмалли мероприятисем ҫинчен ТАСС руководителӗ Н. Г. Пальгунов, «Правда» хаҫатӑн пресс-бюро пайӗн редакторӗ В. В. Платковский тухса каланӑ. СССР Культура министрӗн заместителӗ В. Н. Столетов хаҫатсен материальнӑй-техникӑлла никӗсне лайӑхлатмалли мероприятисем ҫинчен каланӑ.

Канашлура КПСС Центральнӑй Комитечӗн секретарӗ Н. С. Хрущев юлташ сӑмах тухса каланӑ.

Хӑйӗн сӑмахӗнче Хрущев юлташ КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫласишӗн кӗрешесси ҫинче чарӑнса тӑнӑ, ялхуҫалӑхне малалла ҫӗклентерес тӗлӗшпе партипе правительство палӑртнӑ мероприятисене пурнӑҫлас ӗҫре совет пичечӗн пысӑк пӗлтерӗшне палӑртнӑ.

Пирӗн ҫӗршывӑн ялхуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсене ҫитес ҫулсенче халӑха апат-ҫимӗҫ таварӗсем, ҫӑмӑл промышленноҫа чӗрӗ тавар ҫителӗклӗ парса тӑмалла тӑвас тӗлӗшпе хӑвӑртлӑн аталантарма иксӗмни пысӑк майсем пур. Пӗтӗм ыйту ҫавӑнта пулать: ҫак майсемпе тата резервсемпе пуринпе те усӑ курмалла, вӗсемпе туллин усӑ курассишӗн кӗрешӳ организацилемелле. Ҫак ӗҫре пирӗн пичетӗн пысӑк, тарӑн, нумай енлӗ ӗҫсем тумалла.

Парти организацийӗсем, ялхуҫалӑх органӗсем Центральнӑй Комитетӑн сентябрьти Пленумӗн постановленине пурнӑҫлас енӗпе пысӑк ӗҫсем пуҫласа янӑ. Анчах ку тапхӑрта те пысӑк ҫитменлӗхсем [illegible]. Нумай облаҫсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, выльӑхсем валли апат хатӗрлес тӗлӗшпе панӑ задачисене пурнӑҫласси ҫителӗксӗр пырать, выльӑх-чӗрлӗх витисем тӑвас ӗҫ юлса пырать. Ҫакна йышӑнас пулать: ӗҫе партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ хушнӑ пек улӑштарса ҫӗнетесси ҫаплах вӑраххӑн пулса пырать-ха.

Хаҫатсемпе журналсем сайра хутра кӑна мар Центральнӑй Комитет Пленумӗ кӑларса тӑратнӑ задачӑсене татса панӑ пек кӑтартма пӑхаҫҫӗ. Ҫакӑн пек лӑплантарса ларни вӑл ӗҫе сиен кӳме кӑна пултарать. Ҫитменлӗхсене хирӗҫ активлӑ кӗрешмелле.

Хрущев юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче хаҫатсемпе ӗҫлес задачӑсем ҫинче тӗплӗн чарӑнса тӑнӑ. Вӑл ҫакна кӑтартса панӑ: хаҫатсем ҫаплах МТС-семпе колхозсем валли инженерсем, агрономсем, зоотехниксем суйласа илес ӗҫ вырӑнта мӗнле пыни ҫинчен начар сутатаҫҫӗ. Парти организацийӗсен яланах ялти лайӑх работникӗсене, ялхуҫалӑх производствине пӗлсе ертсе пыма пултаракан ҫынсене суйласа илес тӗлӗшпе ҫаплах питӗ нумай ӗҫлемелле пулать-ха. Нумай республикӑсенчи, крайсенчи, облаҫсенчи хаҫатсем кунта та ӗҫе лайӑх енчен кӑна кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем ялхуҫалӑхне яракан специалистсен ытти работникӗсен йышӗ ҫинчен ытларах ҫыраҫҫӗ, анчах кайсене яла яни ҫинчен, ҫак работниксем колхозсене, МТС-сене, совхозсене чӑннипе пулӑшу пама пултаракан ҫынсем-и,—ҫакӑн ҫинчен шарламаҫҫӗ.

Ялхуҫалӑхӗ ҫине аристократла пӑхакан работниксем те пӗтмен-ха пирӗн, вӗсем ялхуҫалӑхне хӑпартас тӗлӗшпе парти тӑвакан ӗҫӗн пӗтӗм тарӑнӑшӗпе пысӑкӑшне ӑнланмаҫҫӗ. Пичетӗн колхозсемпе МТС-сен ыйтӑвӗсем ҫине улпутла йӗрӗнсе пӑхакан сиенлӗ шухӑшсене тӗрӗ шыв ҫине кӑларас пулать.

Парти организацийӗсем колхоз председателӗсемшӗн ҫителӗксӗр тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах колхоз председателӗ колхоз производствинче ӗҫе татса паракан тӗп фигура пулса тӑрать. Колхозсене ертсе пыма колхозниксен шанӑҫне лайӑх тӳрре кӑларма пултаракан, ялта парти политикине тӗрӗс тытса пыма пултаракан ҫынсене уйӑрса лартас пулать. Райком секретарӗсен тивӗҫлӗхӗ, вӗсем ҫитӗнсе ҫитни, вӗсем массӑсене ертсе пыма пултарни, чи малтан, колхоз председателӗсем пулма пултарулӑ ҫынсене, обществӑлла хуҫалӑхӑн лайӑх организаторӗсене суйласа илме пӗлнинче палӑрмалла. Шел пулсан та, ҫакна палӑртма тивет: парти организацийӗсем колхоз председателӗсен кадрӗсемпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Хаҫатсем кусен ӗҫри ҫитменлӗхсене йӑвашшӑн критиклеҫҫӗ, вӗсем лайӑх колхоз председателӗ ҫинчен час-часах ҫыраҫҫӗ. Ку та кирлӗ ӗнтӗ. Анчах ҫакӑ начар: хаҫатсем колхоз председателӗсем пулма суйласа илес тата уйӑрса лартас практикари ҫитменлӗхсене уҫса палӑртмаҫҫӗ, ялхуҫалӑх артелӗсен председателӗсем пулса ӗҫлеме чылай чухне ирӗксӗр, малтанхи вырӑнта ӗҫе япӑхтарнӑ ҫынсене сӗннине килӗшеҫҫӗ. Районти ертсе пыракан сыпӑка—партин райкомӗсене, райисполкомсене чылаях тӗрӗслетни кирлӗ.

Пичет пӗлтерӗшӗ пирӗн мӗнпур ӗҫре питех те пысӑк. Хаҫат ӗҫне ӑнӑҫлӑ тӑвас тесен, хаҫатсемпе журналсен работникӗсен пурнӑҫ кӑларса тӑратакан ыйтусен пӗлтерӗшне тарӑнрах пӗлмелле, ӗҫе пӗлсе, конкретлӑ ҫырмалла. Хаҫатсен пирӗн ӗҫри ҫитменлӗхсене ҫивӗччӗн уҫса палӑртмалла, ҫитменлӗхсене уҫса кӑтартмалла. Ҫак ӗҫе ҫитменлӗхсене пӗтерме ҫынсене мобилизацилес тӗлӗшпе, ӗҫсынисен анлӑ массисене тӗрӗс те усӑллӑ критикӑна вӑйлатма ҫӗклентерес тӗлӗшпе туса пымалла.

Хаҫатсем хӑшпӗр чухне материалсене расшипе пек ҫырса кӑлараҫҫӗ. Заголовоксем тӑрӑх шутласан, хаҫатра пурте пур пек, тӗрӗссипе вара нимӗн те ҫукпа пӗрех. Ҫакӑн пек хаҫат редакторне вӑл ҫак темӑна сутатман тесе калама пӑх-ха, вӑл сана: кӳп пек калани тӗрӗс мар тесе ответлет, ҫавӑнтах заголовоксем ҫине, ҫак ыйтусем тӑрӑх ҫырнӑ статьясем ҫине кӑтартса парать. Анчах та редакци мӗнле тӗллев лартнине ӑнланма ҫук пулсан, вӑл е ку статьяна тата корреспонденцие пичетлесе вӑл мӗн тума тӑрӑшни паллӑ мар пулсан хӑшпӗр статьясен усси нумай-и-ха, шухӑшӗ нумай-и-ха. Редакци вӑл е ку пысӑк ыйту тӑрӑх статья ҫырма шут тытрӗ пулсан, унӑн ҫак ыйтӑва тӗплӗн сӑпаса вӗренес пулать. Хаҫатра пичетленекен материал пур енчен те тӗплӗн ҫырнӑ материал пултӑр, вӑл колхоз председательне, бригадира, ялхуҫалӑхӗпе чӑннипех тӑрӑнӑн интересленекен кирек кама та интереслентерме пултартӑр, ӑна интересленсе вулаччӑр. Редакторӑн сотрудниксем тӗрӗс суйласа илме, хаҫат е журнал ӗҫне пӗлекен ҫынсене хутшӑнтарма пӗлес пулать, кӑларса тӑратнӑ задачӑна мӗнле татса памаллине хӑйӗн ӑнланас пулать. Шухӑшлакан ҫынсене тупма, халӑх пухнӑ опытпа усӑ курма пӗлес пулать.

Ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсене сутатнӑ чухне нумай хаҫатсемпе журналсен редакцийӗсем ҫӗршывӑн тӗрлӗ районӗсенчи вырӑнти условисене час-часах шута илмеҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра тӑваткал тӗмӗн акасси ҫинчен, сӑмахран, сахал мар ҫыраҫҫӗ. Ку лайӑх ӗнтӗ. Анчах та ҫакӑ начар: хаҫатсенче ҫырнӑ тӑрӑх ҫак меслетпе Совет Союзӗнчи мӗнпур зонӑсенче пӗр пекех усӑ курмалла пек, тӑваткал пысӑкӑшӗ пур ҫӗрте те пӗр пек пулмалла пек тухать, тӑпра уйрӑмлӑхӗсене тата ҫутҫанталӑкӑн ытти условийӗсене шута илмеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл пурнӑҫа пӗлменниччен килет. Ытти нумай ыйтусем ҫинчен те ҫакӑн пекех калама пулать. Хаҫатсемпе журналсен работникӗсен хӑйсен ҫырнин [illegible] тусене лайӑх пӗлес пулать, тӗплӗн сӑпаса вӗренес пулать. Пирӗн нумай хаҫатсене сухӑрашу, шаблӑ сӑмахсем хыҫҫӑн хӑвалассин кансӗрлет. Паллах, статья ятне пама пӗлни кирлӗ, заголовок вулакана хӑй енне ҫавӑртӑр, мобилизацилеме пултартӑр. Анчах та ҫак правилӑна асра ҫирӗп тытни кирлӗ: статья заголовокӗ унӑн содержанине тивӗҫтертӗр, хаҫатри материал ӑнентерлле, тӗплӗн ҫырнӑ материал пултӑр. Хаҫат работникӗсем енчен содержаниллӗ, чӗрӗ, интереслӗ, вӗрентекен материал тупма пӗлни кирлӗ. Хаҫат страницисенчен тарӑн тымар янӑ шаблонсене, пулса тӑнӑ стандартсене, пурин ҫинчен те пӗр тӗслӗх тӑрӑх ҫырассине хуса кӑлармалла. Хаҫатсем икӗ колхоз ӗҫне танлаштарса кӑтартма тытӑнчӗҫ. Ку лайӑх меслет. Анчах материалсене тӗрлӗ тӗслӗ тума тӑрӑшмалла, хаҫатсенче тата журналсенче пичетлекен материалсен содержанийӗ ҫинчен те, форми ҫинчен те ытларах пухӑшламалла.

Пичет работникӗсен яланах ҫакна асра тытас пулать: хаҫатсем ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе тӑма фактсем тӗрӗс пулни, явленисемпе событисем ҫинчен тӗрӗс ҫырса кӑтартни, чӗлхе чӗрӗ те илемлӗ пулни, материалсем памалли форма тӗрлӗрен пулни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Хрущев юлташ чылай хаҫатсен, уйрӑммӑн илсен, «Курская правда», «Рабочий путь» (Смоленск), «Брянский рабочий», «Сельское хозяйство», «Литературная газета» хаҫатсен ӗҫӗсенчи пысӑк ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсене кӑтартса панӑ.

Ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӑларакан журналсенче пысӑк ҫитменлӗхсем пур, ҫак журналсен нумай редакторӗсемпе редакци коллегийӗсем хӑйсене хушнӑ ӗҫшӗн кирлӗ пек тӑрӑшмаҫҫӗ. Ялхуҫалӑх министерстви пичет пӗлтерӗшне хакламасть, хӑйӗн журналӗсен редакцийӗсен ӗҫне вуллен ертсе пымасть.

Пирӗн алӑра, тет Хрущев юлташ, пирӗн пичет пек пуринчен те вӑйлӑрах, пуринчен те пултаруллӑрах хӗҫпӑшал урӑх ҫук. Пичет вӑл пирӗн партин идея тӗлӗшпе чи ҫивӗч хӗҫпӑшал. Эпир хаҫатсемпе журналсем валли материалсем лайӑх суйласа илес пулсан, нумай пиншер километрти тӗллевсене персе тивертӗр, пирӗн пысӑк ҫӗршывӑн мӗнпур кӗтесӗсенчи ҫитменлӗхсене уҫса палӑртма пултартӑр. Ҫавӑнпа та кам та кам пичете хакламасть, вӑл пирӗн вӑйсене вӑйсӑрлатать.

Ялхуҫалӑхӗ ҫинчен, КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртесси ҫинчен тарӑн, содержаниллӗ, ӗҫе пӗлсе ҫырас пулать.

Малалла Хрущев юлташ партипе правительство промышленноҫа малалла аталантарасси ҫинчен, уйрӑммӑн илсен, халӑх кулленхи кирлӗ таварсем туса кӑларассине татӑклӑн ӳстерессине ҫинчен йышӑннӑ решенисене пурнӑҫласишӗн кӗрешес тӗлӗшпе пичет умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен каларӗ. Вӑл конкретлӑ тӗслӗхсемпе фактсем тӑрӑх пирӗн фабрикӑсемпе заводсен хӑвӑртлӑхсене ӳстерме, тата производство пысӑкӑшне ӳстерме кӗҫ пек пысӑк резервсем пуррине кӑтартса парать. Задача ҫапла пек: промышленность продукцийӗ туса кӑларассине производствӑлла площаде ӳстермесӗр, производство технологине лайӑхлатнипе тата оборудованипе ытларах тупӑшлӑ усӑ курнипе ӳстермелле ҫӗнӗ майсем шыраса тупас пулать. Кунта малта пыракансен опычӗ ҫинӗ, вӗсен ӗҫри прогрессивлӑ меслечӗсем ҫине яланах таянса ӗҫлени кирлӗ, плансене тултарассишӗн тата ирттерсе тултарассишӗн, продукци пахалӑхне пур майсемпе те лайӑхлатассишӗн социализмла ӑмӑртӑва анлӑрах сарса ямалла, массӑсен творчествӑлла пуҫарӑвне анлӑн аталантармалла. Кунта та пичет парти организацийӗсене пысӑк пулӑшу пама пултарать тата пулӑшмалла та.

Пичетри критика—чи витӗмлӗ критика. Хаҫат страницисенче совет ҫыннисен пурнӑҫпа йӑла ыйтӑвӗсем ҫине бюрократла пӑхакан работникӗсене, начар пахалӑхлӑ продукци кӑларакан ҫынсене питлемелле. Ӗҫсыннисен йӑла ыйтӑвӗсем ҫине ытларах тимлӗн пӑхмалла, пичетре сурт-йӗр строительстви мӗнле пыни ҫинчен те, хваттерсем валеҫни ҫинчен те, халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларасси ҫинчен те, суту-илӳ организацийӗ ҫинчен те ҫырмалла. Магазинсенче, тӗслӗхрен, ачасем валли ҫӑматӑсем тата ытти кирлӗ япаласем ҫук пулсан, ҫакӑнпа килӗшме ҫук. Кун пек пулни вӑл шутласа пӑхма пӗлменниччен мар, работниксен тӑмсайлӑхӗнчен, хӑйсене хушнӑ ӗҫе начар туса пыракан ҫынсенчен килет. Пичетӗн партипе совет организацийӗсене ҫитменлӗхсене кӑларса пӗтерме, бюрократизма хирӗҫ тата пирӗн мӗнпур ӗҫри тирпейсӗрлӗхе хирӗҫ кӗрешме пулӑшса пырас пулать.

Пирӗн хуҫалӑх ӗҫӗнчи ҫитӗнӳсен никӗсӗ вӑл—партилле-политикӑлла ӗҫ пулса тӑрать. Япаласем туса кӑларассишӗн кӗрешес тесен ҫак япаласене тӑвакан ҫынсене организацилени кирлӗ. Парти организацийӗсен мӗнпур ӗҫӗн шайне, парти пропагандипе, идеологи ӗҫӗн шайне ҫӳлӗ вырӑна ҫӗклес пулать. Парти организацийӗсем тӗреклӗ пулни, идея енӗпе пӗтӗҫуллӗ пулни питех те кирлӗ.

Коммунизм строительствин аслӑ задачисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама пирӗн пур майсем те, пур условисем те пур, тенӗ юлашкинчен Хрущев юлташ. Пирӗн ҫӗршывӑн ҫутҫанталӑк пуянлӑхӗ иксӗмни нумай. Совет халӑхӗ Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗ ертсе пынипе, Ленин ертсе пынипе, вӑл вилнӗ хыҫҫӑн Сталин ертсе пынипе социализм строительствинче пысӑк опыт пухрӗ. Пирӗн тивӗҫ вӑл, ҫак опыт ҫине таянса унпа ӗлӗкӗн усӑ курса ҫитӗнӳсене нумайлатса пырасси, коммунизм обществине [illegible] пырасси пулать. (ТАСС).

Социализм ҫӗнтерни ҫӗршывӑн Конституцийӗ

СССР Конституци Бунӗ—совет халӑхӗн, халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи ӗҫсыннисен тата пӗтӗм прогрессивлӑ этемлӗхӗн уявӗ. ССР Союзӗн ҫӗнӗ Конституцине Советсен Чрезвычайнӑй VIII-мӗш съездӗнче 1936 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнче йышӑннӑ. Конституци социализмӑн историлле ҫӗнтерӗвӗсене, совет халӑхӗ Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе тунӑ ҫитӗнӳсене закон йӗркипе ҫирӗплетнӗ. Конституци пӗтӗм тӗнче историйӗнчи ҫак факта — ССР Союзӗ аталанӑвӑн ҫӗнӗ тапхӑрне кӗнине, социализмла общество туса хурса майӗпен коммунизм тӑвас тапхӑра кӗнине кӑтартса панӑ.

СССР Конституцийӗнче социализм принципӗсене, ССР Союзӗнчи обществӑпа государство йӗркине, социализмла обществӑн экономикӑлла никӗсне класлӑ структурине, социализмла демократизмӑн принципӗсене наука хӑвачӗпе тӗплӗн сутатса панӑ. Ҫак историлле документӑн уйрӑмах пысӑк пӗлтерӗшӗ ҫакӑн пек: вӑл ССР Союзӗнчи халӑхсем ҫӗнсе илнине палӑртса тӑрать, вӑл совет ҫӗршывӗ ирӗклӗн тата никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассине чӑннипех те ӗҫе кӗртет, халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫӗпе культурине тӑтӑшах ӳстерсе пыма май парать.

Пирӗн ҫӗршывра капитализма пӗтернӗ тата социализмла строй ҫӗнтернӗ факт СССР Конституцийӗнче тӗп вырӑнта тӑрать. Помещиксемпе капиталистсен власне сирпӗтсе антарнипе тата пролетариат диктатурине туса хунипе пула рабочисемпе хресченсен Совет государстви пулса тӑнӑ тата тӗреклене пынӑ. Совет государстви ирӗке тухнӑ халӑх социализмла общество тӑвассишӗн кӗрешес ӗҫре хӑватлӑ орудии пулса тӑнӑ. Совет влаҫӗ хуҫалӑхӑн капитализмла системине пӗтернӗ, производство орудийӗсемпе хатӗрӗсем уйрӑм ҫынсен харпӑрлӑхӗ пулассине пӑрахӑҫа кӑларнӑ тата ҫынна ҫын эксплуатацилессине пӗтернӗ. Совет ҫӗршывӗнче хуҫалӑхӑн социализмла системи тата производство орудийӗсемпе хатӗрӗсем социализмла харпӑрлӑх пулса тӑрасси ҫирӗпленнӗ, вӗсем ҫӗнӗ обществӑлла стройӑн ҫирӗп никӗсӗ пулса тӑнӑ.

Экономикӑра улшӑнусем пулнӑ май совет обществинчи классен структури те тӗпренех улшӑннӑ. Пирӗн ҫӗршывра эксплуататорла классене ӗмӗрлӗхех пӗтернӗ. Пирӗн ҫӗршывра рабочи класс, хресченсен класӗ тата интеллигенци юлчӗҫ, коммунизмшӑн кӗрешес ӗҫре вӗсен интересӗсем пӗр пек, ҫавӑнпа вӗсем пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Пӗр-пӗринпе хирӗҫле классем ҫук ҫӗрте пӗр класс тепӗр класа пусмӑрласси тата хӗсӗрлесси пулма пултараймасть. Апла пулсан, унта нацисем пӗр-пӗринпе хирӗҫни те, нацилле пусмӑрлӑх та пулмасть. Научнӑй коммунизмӑн программӑлла документӗнче—«Коммунистсен партийӗн манифестӗнче» Маркспа Энгельс ҫапла ҫырнӑ:

«Пӗр ҫын тепӗр ҫынна эксплуатацилессине пӗтерсен, пӗр наци тепӗр нацие эксплуатацилессине те ҫавӑн пекех пӗтерӗҫ.

Нацисен ӑшӗнчи классем пӗр-пӗринпе хирӗҫесси пӗтнипе пӗрех, нацисем пӗр-пӗри ҫине тӑшмана пӑхасси те пӗтет».

Научнӑй социализмӑн никӗсне хывакансем пулассӑха ҫавӑн пек малтанах геннилле курса тӑни пирӗн ҫӗршывра чӑн-чӑнах пулса тӑчӗ. Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ ирӗклӗ тата пӗр тан правиллӑ нацисем никамӑнхиччен ҫирӗп туслӑ тата тӑванла килӗштерсе ӗҫлесе пурӑннин пахи тӗслӗхӗ пулса тӑрать. Аслӑ вырӑс халӑхӗ тӑванла пулӑшнипе пирӗн Тӑван ҫӗршыври мӗнпур халӑхсем хӑйсемшӗн ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑх ҫӗнсе илчӗҫ, экономикӑна вӑйлан ӳстерме тата формипе нацилле, содержанийӗпе социализмла культурӑна чечеклентерсе халиччен нихҫан курман-илтмен ӳсӗм турӗҫ.

Капитализмла обществӑна классен никсӑн килӗштерме ҫук хирӗҫӗвӗсем тата нацисем хушшинчи хирӗҫӳсем вӑйсӑрлатса пыраҫҫӗ пулсан, совет обществи классен хирӗҫӗвӗсенчен тата нацисем пӗр-пӗринпе хирӗҫессинчен ирӗклӗ. Совет обществинче рабочисем, хресченсем, интеллигенци, ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсем пӗр-пӗринпе туслӑ килӗштерсе ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра социализм ҫӗнтернӗ май малалла яракан ҫавӑн пек хӑватлӑ вӑйсем: совет обществин моралле-политикӑлла пӗрлӗхӗ, ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ, совет патриотизмӗ анлӑ сарӑлса нумай ӳрӗҫ.

Совет обществинче социализмла демократизм пурнӑҫланса пырать. Социализм чухне халӑхӑн тулли правӑсем тата ирӗклӗхсем пур, кун пек правӑсемпе ирӗклӗхсем капитализмла пӗр ҫӗршывра та ҫук. Советлӑ социализмлӑ государство пур гражданӗсене те аслӑ правӑсемпе ирӗклӗхсем—ӗҫлев прави, канӑҫ прави, вӗренӳ прави, ватӑлсан пулӑшу илмелли право парӗ; сӑмахпа пичет ирӗклӗхӗ, пухусемпе митингсем ирттермелли ирӗклӗх, урамра шествисемпе демонстрацисем ирттермелли ирӗклӗх парӗ, гражданссене никам тӗкӗнмелле мар право парӗ. Совет ҫӗршывӗнче чӑннипех пурне те тивӗҫ, пӗр тан, вӑрттӑн сасӑласа суйламалли право пур.

Совет ҫӗршывӗнчи демократи вӑл халӑхӑн чӑн-чӑн демократийӗ, вӑсне ҫитес ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пыракан социализмла демократи паха тӗслӗхӗ пулса тӑрать. Вӑл буржуази демократинчен—ачӗшӗн ҫес тунӑ демократирен пачах урӑхла. Капитал ҫӗршывӗсенче демократи—пуянсемшӗн тата эксплуататорсемшӗн ҫес усӑллӑ демократи. ССР Союзӗнче демократи—ӗҫсыннисемшӗн, пӗтӗм халӑхшӑн. Совет демократизмӗ ӗҫсыннисене ҫӗршыва тытса тӑрас ӗҫе активлӑ хутшӑнма май парать,—кун пек йӗрке буржуалла государствӑсенче ҫук тата пулма та пултараймасть. Совет стройӗн условийӗсенче ӗҫсыннисен нумай миллионлӑ массисем государство влаҫӗн органӗсене суйлама хутшӑнаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата вӗсем государствӑна тытса тӑрас тӗлӗшпе кулленхи ӗҫе те, ҫӗршывӑн политика, хуҫалӑх, культура тӗлӗшӗнчи пӗтӗм пурнӑҫа та хутшӑнаҫҫӗ.

Капитализм халӑхӑн пысӑк пайне пурӑнма чи кирлӗ условисемсӗр хӑварнӑ, миллионшар ӗҫсыннисене нимӗнле правасӑр чурасем туса хунӑ, вӗсен пӗтӗм пурнӑҫӗ, ҫав шутра культурӑлла пурнӑҫӗ те капиталистсем—ӗҫ паракансем мӗн хӑтланнинчен килет. Питех те пысӑк услам илме хапсӑнни буржуалла обществӑна йывӑрлӑха кӗртсе ӳкернӗ. Капитал ҫӗршывӗсенче халӗхи вӑхӑтра ӗҫсӗр тӑрса юлнисем вуншар миллион ҫын шутланаҫҫӗ: пачах ӗҫ тупайманнисемпе эрнере ик-виҫӗ кунлӑха кӑна ӗҫ тупакансем США-ра 13 миллион ҫын, Англире—1,2 миллион, Хӗвеланӑҫ Германире—5 миллион, Италире—4,5 миллион, Японире—10 миллион ҫын, Францире—3 миллион ҫын ытла, Индире—50 миллион ҫын. Анчах халӗ ӗҫ пур ҫынсем те малашне ӗҫ пулассине шанса тӑма пултараймаҫҫӗ. Вӗсен кӑмӑлне ыранах ӗҫсӗр тӑрса юлас хӑрушлӑх яланах пурри хытӑ хумхантарать.

Капитализм миллионшар ӗҫсыннисене тӗттӗмлӗхре тӑратса хӑварнӑ. Халӑхӑн пысӑк пайӗ ачасене хутла вӗрентме вӑй ҫитерейместь. США-ра хут вӗренейменнисем—темиҫе миллион ҫын. Шкулсенчен нумайӑшӗ кивелнӗ, ишӗлес патнех ҫитнӗ, ачасем пушӑ складсенче, гаражсенче, подвалсенче вӗренеҫҫӗ. Америка правительстви халӑха вӗрентес ӗҫ валли наци бюджечӗн сур процентне ҫес, ҫар ӗҫӗ валли паракан укҫаран 150 хут сахалтарах парать. Колонисенче халӑхӑн ытларахӑшӗ пачах хут вӗренмен. «Колонисенчи тӗп халӑхсем пӗлӳсем илни сиенлӗ», тесҫӗ колонизаторсем намӑса пӗлмесӗр.

Капитализмла обществӑра интеллигенцин кун-ҫулӗ йывӑр. Ӑс-тӑнпа ӗҫлекен работниксем хушшинче ӗҫсӗр тӑрса юлнисем йышлӑ пулни ҫинчен буржуалла хаҫатсем те нумай ҫыраҫҫӗ. Аслӑ шкултан вӗренсе тухнисенчен Хӗвеланӑҫ Германире 50 пин ҫын ытла ӗҫ тупаймасӑр пурӑнаҫҫӗ. Специалистсенчен 40 проценчӗ хӑйсен специальноҫӗпе мар, урӑх ӗҫре ӗҫлеҫҫӗ. Ҫамрӑк врачсенчен пилек пин ҫын трамвайсемпе автобуссен кондукторӗсем, официантсем, ҫӗрлехи хуралҫӑсем пулса тата ытти ҫавӑн пек ӗҫре ӗҫлеҫҫӗ. Австрире юлашки ҫулсенче аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ учительсем пурте пекех ӗҫ тупаймаҫҫӗ, буржуазинӗ врач тата учитель пулса ӗҫлекенсем кирлӗ мар. Вӗсенчен «пысӑк услам илме» ҫук. Ҫар хатӗрӗсем тӑвакан производство специалисчӗсем вара буржуазие питех те кирлӗ, вӗсемшӗн «ҫавашнинчен 10 пин доллар таран параҫҫӗ», тенӗ Америка конгрессменӗ Рунеи.

Капитализмла государствӑсен конституцийӗсенче демократилле ирӗклӗхсем ҫинчен каланӑ пулсан, ҫавӑн пек калани рабочин пӗр ирӗклӗх—чуралӑха сутӑнма «ирӗклӗх» пуррине ҫеҫ пӗлтерет. Пӗтӗм пуянлӑх ҫын юнне ӗмекенсен пӗчӗк ушкӑнӗ аллинче пухӑннӑ, халӑхӑн вунӑ пайӗнчен тӑхӑр пайӗн нимӗнле пуянлӑх та ҫук, халӑхӑн ытларахӑшӗ аран-аран, выҫӑ пурӑнакан обществӑра мӗнле ирӗклӗх, мӗнле пӗртанлӑх ҫинчен сӑмах пыма пултартӑр вара! Ҫавӑн пек «ирӗклӗ» обществӑн экономики ҫинчен Францири «Комба» ятлӑ буржуалла хаҫатра каласа пани интереслӗ. Хаҫат ҫапла ҫырать: «Европа экономики, марксистсем ҫав тери хӑюллӑн ӗмӗтленсе каланӑ пекех, вӗсем каласа панӑ правиласем тӑрӑх, питех те хӑвӑрт арканса пырать, хӑвна хӑв Мускаври университетра политэкономи ҫинчен лекци итлесе ларатӑн пуль тесе шутлама пулать. Ҫӗнӗрен хӗҫпӑшалланас политикӑна пула капиталистла хирӗҫӳсем питех те ҫивӗчленсе ҫитрӗҫ. Ҫав хирӗҫӳсем Хӗвеланӑҫӗнчи ҫӗршывсемшӗн ҫакӑн пек лару-тӑру туса хураҫҫӗ: вӗсем вӑрҫӑ пуҫланиччен ҫав вӑрҫӑра параҫҫӗ... Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем «ирӗклӗ тӗнчере» кӗлмӗҫсен синдикачӗ туса хучӗҫ, унтан лайӑхраххипе тӑваймарӗҫ».

Елӗкрех, капитализмӑн малтанхи тапхӑрӗнче, демократилле ирӗклӗхсем буржуазин ялавӗ пулнӑ, ҫапла майпа буржуази халӑх хушшинче хӑйӗн ятне сарнӑ. Ҫав ялава ҫӗклесе буржуази государство влаҫне хӑйӗн аллине ҫавӑрса илнӗ. Халӗ ҫав буржуазинех, империализмӑн пысӑк хирӗҫӗвӗсем умӗнче пӑтрашса ӳкнӗскер, ирӗклӗхшӗн кӗрешес юхӑм тӗнчере пур ҫӗрте те хӑвӑрт ӳсе пынинчен хӑраса ӳкнӗскер, ҫав ирӗклӗхсене пӗтерсе тӑкрӗ. Буржуалла-демократилле ирӗклӗхсен ялавне аякалла кӑларса ывӑтнӑ. Конституци ҫине ҫырса хунӑ правӑсене халӑх умӗнчех пӑчӗклетсе, хӗсса пыраҫҫӗ, суйлав законӗсене нимӗн имӗнмесӗрех «улӑштарса ҫӗнетеҫҫӗ», ирӗклӗ сӑмах калакансене хытӑ хӗсӗрлеҫҫӗ. Влаҫра тӑракан классем политика киревсӗр ӗҫсем тутарнипе, ирексӗрленипе, суда хӗсӗрленипе, ҫынсене пере-пере вӗлернипе, фашистла террорпа, наци интересӗсене сутнипе хӑйсем пус пулса тӑрассине сыхласа хӑварма хӑтланаҫҫӗ.

Эксплуататорсем ҫуя сӑмахсен ҫӗрӗмлӗ тӗтрипе ӗҫсыннисен ӑс-тӑнне темиҫе ӗмӗр хушши минретсе тӑнӑ пулсан, ҫав тӗтрене социализм ҫӗнтерни сирсе ячӗ. Социализм ӗҫсыннин шухӑш-кӑмӑлне урӑхлатса ҫӗнетрӗ, миллионшар ҫынсене историри ӗҫе ӑнланулӑн туса пыма ҫӗклерӗ. Социализмла идеологи, совет ҫӗршывӗнчи миллионшар ҫынсен шухӑшне ҫӗнетсе, питех те хӑватлӑ материальнӑй вӑй пулса тӑчӗ. Ҫавӑ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ тӑрӑшнипе пурнӑҫланчӗ, вӑл тава тивӗҫлӗ пысӑк ӗҫ турӗ. Марксистла-ленинла парти пур ӗҫсенче те ҫакна шута илет: халӑх—историе тӑвакан, историлле процесра ӗҫе татса паракан вӑй. Парти сур ӗмӗр хушши халӑх ӗҫне вӗҫӗмсӗр парӑнса туса пычӗ, халӗ те туса пырать, ҫӗнӗ пурнӑҫ—коммунизм тӑвас ӗҫре питех те пысӑк ҫитӗнӳсем тума пултарчӗ. Коммунистсен партийӗ—халӑхӑн шанчӑклӑ, тӗрӗслевсем витӗр тухнӑ, аслӑ тусӗ. Коммунистсен партийӗ социализмла обществӑн ҫул кӑтартса, ертсе пыракан вӑйӗ пулса тӑнине пурте йышӑннӑ ӗнтӗ. Ҫак историлле факта СССР Конституцийӗнче закон йӗркипе ҫырса хурса ҫирӗплетнӗ.

Социализм ҫӗнтерни халӑх вӑйне вуншар хут ӳстерчӗ. Хуҫалӑхӑн социализмла системи тата производство хатӗрӗсен социализмла харпӑрлӑхӗ ҫӗнӗ производствӑлла хутшӑнусене палӑртса тӑраҫҫӗ. Ҫӗнӗ производствӑлла хутшӑнусем ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене аталантарма анлӑ майсем уҫса пачӗҫ.

Социализмла экономика питӗ хӑвӑрт малалла кайса пычӗ. Ҫавӑн пек хӑвӑрт малалла каяссин ҫинчен капитализм хӑй чечекленсе пынӑ лайӑх вӑхӑтра та ӗмӗтленме пултарайман. Кӗске вӑхӑт хушшинче — юлашки 28 ҫул хушшинче — ССР Союзӗнче промышленность продукцийӗ туса кӑларасси 29 хут, производство хатӗрӗсем туса кӑларасси вара—5 хута яхӑн ӳсрӗ. Социализмла экономика мӗнпур отраслӗсем хӑватлӑн вӑйлан пынипе ССР Союзӗнчи ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ султан-сул лайӑхланса пырать. Росси 1913 ҫулхи наци тупӑшне танлаштарсан, ССР Союзӗн наци тупӑшӗ 1940 ҫулта улттӑ хут, 1952 ҫулта вара 1940 ҫулхинчен икӗ хут ытла ӳснӗ. Ҫав тупӑш пӗтӗмпех совет обществине усӑ тума каять. Рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫи, хресченсен реальнӑй тупӑшӗсем тӑтӑшах ӳсса пыраҫҫӗ. Апат-ҫимӗҫ тата промышленность таварӗсен хакӗсене султан-сул йӳнетсе пыраҫҫӗ, халӑхӑн мӗнпур [illegible] таварсем ытларах туянаҫҫӗ. Пуранмалли суртсем, [illegible]сем, больницӑсем, ача-пӑча учр[ежденийӗсем], магазинсем, столовӑйсем [illegible] анлӑ сарӑлчӗ, социальнӑй стра[хованипе] социальнӑй обеспечени валли ҫул[ленех] укҫа нумайрах уйӑрса параҫҫӗ.

Социализмӑн экономикӑлла тӗп [illegible] асра тытса, Коммунистсен партийӗ [тата Со]вет правительстви СССР Ялхуҫ[алӑхне] малалла аталантарма, халӑха [illegible] кирлӗ япаласем туса кӑларассин[е] [хӑ]вӑрт вӑйлатма, [illegible] [со]вет обществин мӗнпур членӗсем [illegible] апат-ҫимӗҫ нумайрах та нумайрах [illegible] хаклӑ ҫынна кирлӗ чухлӗ, наука [illegible] панӑ нормӑна ҫитермелех туса [illegible] мелле тӑвас задача лартнӑ. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа [illegible] Пирӗн социализмла обществӑн тата [го]сударствӑн питех те пысӑк вӑй [illegible] стройӗ, Коммунистсен партийӗн [по]литики, халӑхӑн тӗп интерес[ӗсене] лартса тӑракан политика, [illegible] ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗрессине [illegible] тӑраҫҫӗ.

СССР Конституцийӗ совет ҫын[нисене] коммунизм тума организацилесе [illegible] тата хавхалантарса [illegible] хӑватлӑ вӑй пулса тӑрать. Вӑл уҫҫӑн кӑтартса парать: капитал[ист] [эк]сплуатацирен, ют ҫӗршывсен [illegible] хӗн-хур кӑтартассинчен хӑт[ӑлнӑ] [illegible] ирӗклӗн малалла аталанса пыра[кан] халӑх питех те чаплӑ ӗҫсем ту[ма пултаракан] тӑрать.

Халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи [illegible] писемшӗн СССР Конституцийӗ [illegible] лӗх пулса тӑрать, вӗсем, совет[[illegible]] тӑванла, ырӑ кӑмӑлпа пулӑшнипе [illegible] тӑвас ӗҫе ӑнӑҫлӑ пурнӑҫла[са пы]раҫҫӗ.

Капитал пусмӑрӗ айӗнче асап [куракан] халӑхсене СССР Конституцийӗ [эксплуа]тацирен, ӗҫсӗрлӗхрен, чухӑнлӑх[ран хӑ]тӑлмалли ҫула, этемлӗх экономи[ка тата ӑс-]тӑн пӗлӗвӗсем тӗлӗшӗнчи халӑх[сем них]ҫан курман ҫӳлӗше ҫитиччен ӳс[мел]ле кӑтартса парать.

Социализм ҫӗр чӑмӑрӗ ҫин[че] [illegible] валли ҫул уҫса пырать. Вун[шар мил]лион тата ҫӗршер миллион ҫын[сем] революцилле кӗрешӗвӗн [illegible] социализм сӑмаха ҫырса хунӑ. [Капиталис]тилле ҫӗршывсенче пурӑнакан 80[0 мил]лион ҫын хӑйсен кун-ҫулне ӗмӗр[лӗхех со]циализмпа тачӑ ҫыхӑнтарнӑ. Пӗ[тӗм тӗн]чери ӗҫсыннисене миршӗн, демо[кратилле] ирӗклӗхсемшӗн, социализмшӑн [кӗрешес] ӗҫре совет ҫыннисен паттӑр ӗҫ[ӗсем] [пирӗн] ҫӗршывра коммунизм строит[ельствинче] тунӑ ҫитӗнӳсем хавхалантараҫҫӗ.

А. [illegible]

КОЛХОЗЛА ИМЕНКАССИНЧЕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Именкасси кашни ҫул-ҫулӑнчӗ ҫуллен-ҫул ҫӗнелет. Ялта вӑтам шкул, библиотека, кинотацковар, клуб, почта агентстви, фельдшер пункчӗ, кооператив лавкки пур.

Ялти интеллигенци йышӗ те ӳсех пырать. Халӗ аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухнисем 16 ҫын, вӑтам шкулсенче вӗренсе специальность илнисем 66 ҫын. Кунсӑр пуҫне аслӑ тата вӑтам шкулсенче 200 ҫынна яхӑн вӗренет.

Ялти «Путь Ленина» колхоз султан-сул [illegible], пуянланать. Колхозниксен пурнӑҫӗ те лайӑхланса пырать. [illegible] колхозниксем аванс пуҫне [illegible] пӗ пуҫне икшер килограмм тыр[ӑ] [illegible] шер килограмм ҫӗрулми вал[еҫнӗ].

Колхозра кӑҫал 1.000 [illegible] лӑх типлӑй вите тунӑ, [illegible]

Асри тата куҫ умӗнчи

Эпир иртнипе хальхине час-часах танлаштаратпӑр—иртни пирӗн асра юлнӑ, хальхи куҫ умӗнче—ҫав танлаштаруран вара пурнӑҫ мӗн тери малалла кайни, малалла кайса пыни лайӑх курӑнать.

5—6 ҫул каярах кӑна-ха, хула хӗррине тухса виҫ-тӑватӑ ҫухрӑм тӑвасси сывӑхах мар пек туйӑнатчӗ, ҫитес ҫӗре ҫитме хирпе утмаллаччӗ, халӗ унта ҫӗнӗ урамсем тӑсӑлаҫҫӗ, ҫӗнӗ ҫуртсем лараҫҫӗ—унта ҫитме ӗнтӗ хуларан тухмастпӑр та. Ҫапла сарӑлса, пысӑкланса пырать пирӗн Шупашкар.

Шупашкарти пир-авӑр комбиначӗ тӗлне пысӑк та илемлӗ автобуссем умлӑн-хыҫлӑн тенӗ пекех ҫитсе, каялла ҫаврӑнса каяҫҫӗ. Вӗсенчен анса юлнӑ ҫынсемпе пӗрле эпир те аслӑ комбината кӗретпӗр.

Пирӗн республикӑра кун пек пир-авӑр комбиначӗ пулман. Чӑвашсем ӗлӗкрех хӑйсен ҫӗрӗ ҫинче ҫакӑн евӗр пысӑк фабрикӑсем лартасси ҫинчен ӗмӗтленме те пултарайман. Эпир ача чухне улача пир кӗпе тӑхӑнса ҫӳренине хамӑр та астӑватпӑр-ха. «Пасар кӗпи» тӑхӑнакансем пуянсемпе вӗсен ачисем анчахчӗ. Пир туса «ҫие-пуҫа питӗресси» йывӑр ӗҫ пулнӑ аннесемшӗн. Кантӑрне акмалла, татмалла, хутмалла, унтан типӗтсе тылламалла, арламалла, тӗртмелле т. ыт. те—ҫак йывӑр ӗҫсене пӗтӗмпех алӑпа тунӑ. Халӗ те сынах тӑвать ҫав ӗҫсене. Анчах мӗн чухлӗ ҫӑмӑлланнӑ—ҫӗре тракторпа сухаланинчен тытӑнса йӗкене машинӑпа ҫавӑрттарни таранччченех ҫӑмӑлланнӑ ун ӗҫӗ. Миҫе хут ӳснӗ тата ҫав ӗҫӗн тухӑҫлӑхӗ—сип пӗтӗрекен машина (тӗслӗхрен илетӗп) пӗр минут хушшинче йӗкене хӑй тавра сакӑр пин хут, арлакан машина вунӑ-вуникӗ пин хут ҫавӑрать; тӗртекен станок (ӑна чӑвашсем «ӑстан» теҫҫӗ) пӗр сменӑра хӗрӗх ҫилӗк—аллӑ метр ытларах пир тӗртсе кӑларать; пӗр ткачиха хӗрӗх сакӑр станокпа ӗҫлеме пултарать. Ҫак автомат-станоксем пурте ҫӗннисем кунта; вӗсем аслӑ та ҫутӑ, ӑшӑ цехсенче лараҫҫӗ; кунта, пӳртсенче арланӑ е тӗртнӗ чухнехи пек, йывӑр сывлӑш ҫапмасть, ӳпкене тусан лармасть,—ҫыннӑн сывлӑхне ҫапла сыхлаҫҫӗ. Ҫынран хакли пирӗн ҫӗршывра—ним те ҫук.

Лайӑх ӗҫлекенсене хисеп, ырӑ ят, мухтав. Комбинатра малтанах ӗҫлеме тытӑннӑ А. Алехина ленточница, М Солдатова ткачиха, Е. Барцеева ровничница, мастер помощникӗ П. Михайлов, В. Петрова прядильщица, цех начальникӗсем Н. Филиппова, З Мамаева тата ытти нумай-нумай юлташсен ячӗсене комбинатра та, хулара та лайӑх пӗлеҫҫӗ.

Анчах ӗҫре малта пыракансем кӑна мар, юлакансем те пулаҫҫӗ. Лайӑх ӗҫлекенсемшӗн кӗвӗҫекенсем ҫук, начартарах [illegible]шӗн савӑнакан та [illegible] тӗрлӗ [illegible] ырапасене, усалпа мар, [illegible]еҫҫӗ. Вӗсене малтине[illegible] Ҫавӑнтан ытла [illegible] халичен, пирӗн ҫӗр[illegible] пуҫланиччен, уйрӑм [illegible] ҫӗҫ паларӑ пулсан, [illegible] халӗ ӗнтӗ. Пирӗн [illegible] ҫавӑ туйӑма йӑлана кӗр-[illegible]

[illegible] чӑн-чӑнах ҫӗршыв ху[illegible] вӗсем хӑйсен предприяти[illegible] хушӑран [illegible] кӑтартса парать. Ы[illegible] пир-авӑр комбина[illegible] «Пирӗн-и? Пирӗн ҫак комбинат сатин, шта[illegible] кашемир, пурҫӑн тата илемлӗ куҫа йӑмӑхтарса [illegible] кӑларма тытӑнать» тет. [illegible] пулса: «Халӗ на[illegible] электроэнерги ҫи[illegible]» тесе хурать. Ҫитменлӗхсене вӑл, коллектива е комбината хурласа мар, ӗҫе тата лайӑхрах ярасшӑн ӗмӗтпе калать.

Ҫитменлӗхсем нумай-ха. Вӗсем—комбината туса ҫитересси, рабочисем пурӑнмалли ҫуртсене, вӗсен канмалли вырӑнӗсене тӑвасси вӑраххӑн пынинче. Рабочисем канмаҫҫӗ мар, ҫулсерен санаторисене, канмалли ҫуртсене кайса килекенсем шучӗ нумайланса пырать. Вӗсен сумӗнчех—хула, унта театрсем, кинотеатрсем, унтах Атӑл, парксем, клубсем. Анчах комбинатӑн клубӗ пӗчӗккӗ-ха, илемӗпе те куҫа, кӑмӑла илӗртсех каймасть вӑл, ҫавӑнпа унта ҫӳрекенсем сахалтарах-ха. Ҫитес ҫул, рабочисем ыйтнипе, пысӑк клуб тума палӑртнӑ. Тата ҫак ҫитменлӗх куҫа курӑнса каять: хӑшпӗр рабочисем, сывӑхра хваттер ҫук пирки, комбинатран инҫетре пурӑнаҫҫӗ, хӑшӗсем хулан тепӗр енчех. Ӗҫ хыҫҫӑн киле ҫитме пӗр сехет е ытларах та кирлӗ. Ҫыннӑн, килтен ӗҫе вӑхӑтра ҫитес тесе, иртерех тӑрас пулать; ӗҫ хыҫҫӑн—киле ҫитес тесе—васкамалла. Канма, ӑҫта та пулин кайса килме, вулама, вӗренме вӑхӑт сахалтарах юлать.

Халӑхӑн вӗренес кӑмӑлӗ пысӑк. Никҫанхинчен ытла, ҫамрӑк чухне. Вӑл ӗлӗкрех те ҫапларччӗ. Анчах революциччен ӗҫ ҫыннисен ачисемшӗн шкулсем те пулсах вайман, вулама-ҫырма вӗренкеленӗ те — сухапуҫ хыҫне. Ҫакӑ йӑлана кӗрсе пынӑ. Халӗ йӑлтах урӑхла ӗнтӗ. Вӗренме—кирек ӑҫта та ҫул уҫӑ. Шупашкарти пир-авӑр комбинатӗнче эпӗ нумайӑшӗсенчен, унта ӗҫлекенсенчен, ӑҫта вӗренсе тухни ҫинчен ыйтса пӗлтӗм. Вӗсем специальнӑй институтсенчен, нумайӑшӗсем (ҫамрӑксем) хамӑр хулари текстиль техникумӗнче вӗренсе тухнӑ, ӗлӗкрех ҫителӗклӗ пӗлӳ илме ӗлкӗрейменнисем халӗ каҫхи вӑтам шкулта вӗренеҫҫӗ, ҫав хушӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫлеҫҫӗ кӑна мар, лайӑх вӗренеҫҫӗ те лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ вӗсем — электроремонтнӑй мастерскойӗнче ӗҫлекен Соколов Владислав, пир арлакан фабрикӑри мастер помощникӗ Щербаков Василий, Щербаков Леонид—ровничнӑй цехри мастер помощникӗ, Дорохова Анна — ткачиха т. ыт. те—мӗн пурӗ аллӑ ҫамрӑк рабочи ытла вӗренеҫҫӗ. Комбинатра ФЗУ пур, унта виҫӗ ҫӗр ытларах ҫамрӑк рабочисем. Вӗсенчен утмӑлӑшӗ мастер помощникӗ пулма хатӗрленеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, текстильнӑй техникумра каҫхине тата институтсенче (заочно) вӗренеҫҫӗ.

Шупашкарти пир-авӑр комбинатӗнче тӗрлӗрен халӑх ӗҫлет—вырӑс, чӑваш, тутар, мариец, мордва: арлакан фабрикӑн заведующийӗ совет корееҫӗ—П. А. Цай. Вӗсем пурте пӗр килйышра ӳссе ҫитӗннӗ пек тӑванла пурӑнаҫҫӗ. Вӗсене ҫапла Коммунистсен партийӗ, совет влаҫӗ ҫитӗнтерчӗ, вӗсен [illegible] тӑвансӑхне, вӗсен пурнӑҫне СССР Конституцийӗ никам аркатмалла мар сыхлать.

Пирӗн комбинатран тухатпӑр. Пирӗн умра—айлӑмран темиҫе сӑрталла ҫӗкленсе хӑпаракан тӑван хуламӑр. Вӑл авалхи тӗттӗмрен ҫуттӑлла ҫӗкленнӗн туйӑнать мана.

— Илемлӗ ҫав пирӗн хула,—тет ман ҫамрӑк юлташӑм.—Пӑхса ытараймастӑп.

— Ҫыннисем тата лайӑх, — тетӗп эпӗ.—Мӗншӗн тесен ҫак илеме вӗсем тӑваҫҫӗ.

Мана ҫак самантра халь ҫеҫ тухнӑ комбинатри ҫынсем аса килеҫҫӗ. Вӗсем, Шупашкарти ытти ҫӗрте ӗҫлекенсемпе, вӗсем пирӗн сарлака Тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн кашни хулисенчи, ялӗсенчи ӗҫченсемпе пӗрле, ӗҫ тӗнчи ӗмӗр-ӗмӗр ӗмӗтленнӗ чӑн тӗрӗс Конституци панӑ ырлӑхра пӗр пурнӑҫпа, пӗр ӗмӗтпе пурӑнаҫҫӗ.

Александр АЛГА.

СОВЕТ САМАНИНЧИ ҪЕМЬЕ

Манӑн аттен—хальхи Сӗрпӳ районӗнчи Улешево ялӗнчи хресченӗн ҫемйинче 2 ывӑл та 6 хӗр ӳснӗ. Аслӑватӑп, пире хут вӗрентесси ҫинчен аттепе анне пӗрмаях ӗмӗтленеччӗҫ. Анчах патша саманинче, капитализмла обществӑра ятти ӗҫхресченӗ хӑйӗн ачисене аслӑ е вӑтам шкулсенче вӗрентеймен. Ялти шкула 2—3 ҫул ҫӳренӗ хыҫҫӑн, эпӗ малалла вӗренеймерӗм. 15 ҫул тултарсан, атте ман алла пуртӑ тыттарса, платникре ӗҫлеттерме тытӑнчӗ, унсӑрӑн пирӗн пысӑк ҫемье выҫӑ ларма пултарнӑ.

Манӑн ҫемье те пӗчӗк пулмарӗ. 4 ывӑл та 3 хӗр ӳстертӗмӗр. Вӗсем пурте совет саманинче, аслӑ Октябрь тивлечӗпе, Ленин—Сталин партийӗ туса панӑ ырлӑхра ӳсе ҫитӗнчӗҫ. Совет ҫыннисем хамӑра Совет Конституцийӗ панӑ вӗренӳ правине туллин усӑ курнине манӑн ҫемье пурнӑҫӗ те лайӑх ҫирӗплетсе парать.

Аслӑ ывӑл Михаил, 1914 ҫулта ҫуралнӑскер, Хусанти Бауман ячӗпе тӑракан ветеринари институтӗнчен вӗренсе тухса, ветеринари врачӗн специальноҫне илчӗ, халӗ Государство селекци станцийӗнче наука работникӗ пулса ӗҫлет.

Иккӗмӗш ывӑл—Николай педагогика училищинчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Ростов облаҫне кайрӗ. Унта вӑл 7 ҫул вӗренмелли шкул директорӗ пулнӑ вӑхӑтрах, кӑҫал педагогика институчӗн юлашки курсне вӗренсе пӗтерет.

Владимира, вӑл педагогика училищинчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, Сӗрпӳри вӑтам шкултах ӗҫлеме хӑварчӗҫ, халӗ вӑл та хӑйӗн пӗлӗвне малалла ӳстерме шутлать.

Кӗҫӗн ывӑл—Павел вӑтам шкулта вӗреннӗ хыҫҫӑн Совет Ҫарне кайрӗ. Унта вӑл Ҫар училищинчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн офицер пулса тӑчӗ, халӗ Тӑван ҫӗршывӑн инҫетри чиккисене хураллать.

Лидия ятлӑ хӗрӗм Чӑвашсен ялхуҫалӑх институтӗнче вӗренсе зоотехник специальноҫне илчӗ, ӑна вара Архангельск облаҫне ячӗҫ, халӗ вӑл пӗр МТС-ра главнӑй зоотехник пулса ӗҫлет.

Анна—Сӗрпӳри библиотека техникумӗнчен вӗренсе тухсан 2 ҫул хушши ӗҫлерӗ, халӗ Канашри учительсем хатӗрлекен институтра вӗренет.

Чи кӗҫӗнни—Маргарита ҫеҫ специалист пулайман-ха, кӑҫал библиотека техникумӗнче 2-мӗш курсра вӗренет. Ӳсеҫҫӗ, вӗренеҫҫӗ, анчах эпир карчӑкпа старик, пимӗнле йывӑрлӑх та курмарӑмӑр, государство пирӗн ачасене вӗрентме пур майпа та пулӑшрӗ, халӗ те пулӑшать.

Эпӗ Сӗрпӳри обществӑлла мунча заведующийӗ пулса ӗҫлетӗп. Кӑҫал сентябрь уйӑхӗнче, отпуска каяс умӗн, Ростов облаҫӗнче ӗҫлекен ывӑлӑран—Николайран телеграмма илтӗм. Вӑл пире, карчӑкпа иксӗмӗре, отпуск вӑхӑтӗнче хӑйӗн патне хӑнана пыма чӗнчӗ. 60 ҫултан иртнӗ ҫыншӑн инҫетри ҫула тухса ҫӳреме ҫӑмӑл мар. Анчах ытти ывӑл-хӗрсем те пире Николай патне кайса курма сӗнчӗҫ, пысӑк хисеп туса ӑсатрӗҫ.

Ростов облаҫне Мускав урлӑ каймалла пулнипе, карчӑкпа иксӗмӗр хамӑр ҫӗршывӑн аслӑ столицинче чарӑнса тӑтӑмӑр, мухтавлӑ хулан чи илемлӗ вырӑнӗсене курса ҫӳрерӗмӗр.

Ленински тусем ҫинчи тӗлӗнмелле пысӑк та чаплӑ университет ҫуртӗсене курсан, пиренӗшӗн чӑн-чӑн юмахри вырӑна ҫитнӗ пек туйӑнчӗ. Ҫав аслӑ дворец ҫинчен каласа кӑтартма сӑмах та тупса ҫитерес ҫук. Пӗрне ҫеҫ калатӑп: коммунизм тӑвакан хаватлӑ ҫӗршывра ҫеҫ халӑха вӗрентме ҫавӑн пек питех те чаплӑ университетсемпе институтсем тума пултараҫҫӗ.

М. АСАНИН.

Сӗрпӳ хули.

Цифрӑсемпе фактсем

Чӑваш АССР-ӗнчи шултра промышленность туса кӑларнӑ пӗтӗм продукцин хисепӗ 1952 ҫулта 1913 ҫулхинчен (ҫавӑн чухне хальхи Чӑваш республикин территорине кӗнӗ предприятисем туса кӑларнӑ продукцин хисепӗпе танлаштарсан) 32,6 хут ытларах пулнӑ. Промышленность 1952 ҫулта 1940 ҫулхинчен 2,8 хут нумайрах продукци туса кӑларнӑ.

Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче республикӑра промышленноҫӑн ҫӗнӗ отраслӗсене туса хунӑ: торф кӑларакан, металран япаласем тӑвакан, строительство материалӗсем хатӗрлекен, пир-авӑр тӗртекен, машинӑсем тӑвакан, тумтир тата атӑ-пушмак ҫӗлекен предприятисем лартнӑ.

1952 ҫулта электричество энергийӗ туса парасси, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 3,2 хут, кирпӗч туса кӑларасси — 1,7 хут, атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларасси — 1,9 хут, стандартлӑ ҫуртсем туса кӑларасси—8 хут, йывӑҫ касса турттарса кӑларасси—1,2 хут ӳснӗ. Ҫавӑн пекех тата халӑх валли пуллен кирлӗ япаласем туса кӑларасси те чылай вӑйланнӑ.

* * *

1953 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне республикӑра тракторсен шучӗ. 1941 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне пулнипе танлаштарсан, 72,4 процент тата комбайнсен шучӗ—103,3 процент ӳснӗ.

Республикӑри колхозсен акмалли ҫӗр лаптӑкӗ 1953 ҫулта, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 5,5 процент чухлӗ пысӑкланнӑ, ҫав вӑхӑт хушшинчех техникӑлла культурӑсем акнӑ ҫӗр лаптӑкӗ 100,1 процент, ҫурхи тулӑ акнӑ ҫӗр лаптӑкӗ 26,9 процент ӳснӗ.

* * *

Государствӑпа кооперацин вакка́н сутӑ-илӗвӗ енӗпе тӗрлӗ таварсем ҫултан-ҫул ытларах та ытларах сутаҫҫӗ. 1953 ҫулта халӑха апат-ҫимӗҫ тата промышленность таварӗсем пӗлтӗрхинчен чылай нумайрах сутнӑ.

Магазинсемпе ларексен шучӗ 1953 ҫулта, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 24 процент, столовӑйсемпе чайнӑйсен шучӗ—35 процент ӳснӗ. Ялсенче уйрӑм ӗҫпе[illegible] таварсен сутма усӑ магазинсен шучӗ нумайланса пырать.

* * *

Республикӑра тӑватӑ театр ӗҫлет, икӗ музей пур, киноустановкӑсем—358, клубсемпе вулав ҫурчӗсем—837, халӑх кӗнекесем илме ҫӳрекен библиотекӑсем 941, вӗсенче кӗнекесем 2 миллион экземпляр ытла.

Телейлӗ пурнӑҫ

СССР Конституцийӗ панӑ аслӑ правӑсемпе ирӗклӗхсем пурнӑҫа мӗнле кӗнине пирӗн заводра та курма пулать. Шахтерсем валли пурӑнмалли ҫуртсем туса кӑларакан заводра ҫӗршер рабочи ӗҫлет. Вӗсенчен ҫурри ытла чӑвашсем. Революциччен сухапуҫӗ тытма кӑна пӗлнӗ чӑваш ывӑл-хӗрӗсем халӗ темӗн тӗрлӗ кӑткӑс станоксемпе ӗҫлеҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне ӳстерекен тухӑҫлӑ ӗҫ ҫынна чыс, хисеп кӳрет. Рабочисенчен 70 проценчӗ стахановецсемпе ударниксем. Чылай стахановецсем пилӗк ҫулхи нормӑна 2—3 ҫул хушшинчех тултарнӑ.

Эпир, Ленинла комсомол пӑхса ӳстернӗ ҫамрӑксем, заводра ӗҫлеме тӑӳӗ ҫул каялла кӗтӗмӗр. Пире ҫуртсем тӑвакан цехри детальсем пухакан участока вырнаҫтарчӗҫ. Ырӑ кӑмӑллӑ мастер С. Бузов юлташ вӗрентнипе, эпир хамӑр ӗҫе хӑвӑрт хӑнӑхса пыратпӑр Малтанхи уйӑхсенче нормӑна 110—120 процент тултарнӑ пулсан, ноябрь уйӑхӗнче вара 160 процент таран тултартӑмӑр. Норма ҫурӑ!—ҫакӑн пек пирӗн кашни сменӑри ӗҫ результачӗ.

Ӗҫе кура—укҫийӗ. Эпир ӗҫлесе илекен укҫа-тенкӗ тӑранма та, тумланма та, культура таварӗсем туянма та ҫитет. Пирӗн килти библиотекӑсем кашни уйӑхрах илемлӗ литературӑн ҫӗнӗ произведенийӗсемпе тата учебниксемпе пуянланаҫҫӗ.

Эпир ӗҫлетпӗр, ҫав вӑхӑтрах вӗренетпӗр. Производствӑра ӗҫлесе, ҫав вӑхӑтрах каҫхине вӗренес текен ҫамрӑк рабочисем валли завод вӑтам шкул уҫнӑ. Унӑн ҫутӑ класӗсенче вуншар рабочисемпе служащисем наука никӗсӗсене вӗренсе, аслӑ шкулсене кӗме ҫул уҫаҫҫӗ. Акӑ иртнӗ ҫулсенче каҫхи вӑтам шкул пӗтерӗнӗ ҫамрӑксенчен Н. Орловпа В. Квасков Чӑваш педагогика институтӗнче, Б Гизатуллин Хусанти химипе технологи институтӗнче, Р. Якубов Йошкар-Олари вӑрман институтӗнче вӗренеҫҫӗ.

Ҫакӑ мар-и, СССР Конституцийӗ совет ҫамрӑкӗсене панӑ тивлет! Ҫакӑ мар-и, телей!

Заводра ӗҫлекенсен кану вӑхӑтне усӑллӑ ирттерме клуб, библиотека, стадион, шыв станцийӗ пур. Рабочисен поселокӗнче ҫӗнӗ клуб лартаҫҫӗ, унӑн пысӑк залӗнче пӗр вӑхӑтра 500 ҫын вырнаҫса ларма пулать.

Ӗҫҫыннисен кану правине пурнӑҫа кӗртме профсоюз енӗпе нумай пулӑшаҫҫӗ. Кӑҫал завком панӑ путевкӑсемпе санаторисене 46 ҫын, канмалли ҫуртсене 97 ҫын кайса килнӗ. Рабочисемпе служащисен 300 ачи завод уснӑ пионер лагерӗнче пулнӑ. Чылай рабочисен ачисем ача сачӗсемпе яслисене ҫӳреҫҫӗ.

Телейлӗ пурнӑҫ Законӗ—Конституци Тӑван ҫӗршыври мӗнпур ырлӑха халӑха ҫирӗплетсе пачӗ. Совет ҫыннисене телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса панӑшӑн эпир, рабочисем, партипе правительствӑна чӗререн тав тӑватпӑр.

Пирӗн чи пирвайхи тивӗҫ—Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесси. Ҫуртсем тӑвакансем ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне чыслӑ пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Аслӑ Октябрь 36 ҫул тултарнине вунпӗр уйӑхри производство планне пурнӑҫланипе палӑ туртӑмӑр. Халӗ СССР Конституцийӗн кунне ҫулталӑкри программӑна вӗҫленипе кӗтсе илетпӗр. Завод коллективӗ Тӑван ҫӗршыв валли планран ирттерсе миллионшар тенкӗлӗх продукци туса парать. Виҫҫӗмӗш кварталта завод коллективӗ Пӗтӗм Союзри социализмла ӑмӑртура виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ пулсан, тӑваттӑмӗш кварталта тата маларах тухасшӑн кӗрешет.

Сталинла Конституци хӗвелӗ айӗнче совет ҫӗршывӗ ҫултан-ҫул вӑйланса, чечекленсе пырать. Пирӗн малашлӑх тата та ҫутӑрах, пуласлӑх тата та илемлӗрех. Ҫав малашлӑхшӑн — коммунизмшӑн эпир, рабочисем, ялана вӑя шеллемесӗр ӗҫлеме хатӗр.

Г. ЖЕЛТУХИН,
В. АНТОНОВ,
Куславкkари ҫуртсем тӑвакан заводри стахановецсем,

Государство паракан пулӑшу

— Хамӑн ӗмӗрӗмре икӗ тӗслӗ пурнӑҫ куртӑм. Капитализм вӑхӑтӗнче эпир, чухӑнсем, пуянсемшӗн кӑна пилӗксене авнӑ. Ӗҫленӗ вӑхӑтра суранланас е чирлес-мӗн пулсан, вара эсӗ пуяна кирлӗ мар. Вӑл ӗҫ укҫи тӳлемесӗрех хӑй патӗнчен хӑваласа кӑларса яраччӗ,—тет Шӑнарпуҫ ялӗнчи ҫитмӗл ҫултан иртнӗ Илларион Алексеевич.

— Калама ҫук телейлӗ пурнӑҫ халӗ манӑн ҫемьере,—тет вӑл малалла. — Партипе правительство халӑхшӑн тӑрӑшнине куллен туйса тӑратӑп Манӑн Борис ятлӑ ывӑл Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑран суранланса таврӑнчӗ. Патша вӑхӑтӗнче е хальхи капитализмла кирек хӑш ҫӗршывра пулсассӑн-та, вӑл ӗҫсӗр юлнӑ, выҫӑ ларнӑ пулӗччӗ. Пирӗн ҫӗршывра апла мар. СССР Конституцийӗн тивлечӗпе хам та ывӑл та государствӑран пулӑшу илсе тӑратпӑр. Ывӑл вӑрҫӑран килнӗренпех уй-хир бригадирӗ пулса ӗҫлерӗ. Унӑн сывлӑхӗ тепӗр хут начарланма пуҫласан, ӑна Хусанти пысӑк госпитале юсанма ячӗҫ Халӗ ывӑлӑм сывлӑхӗ лайӑхланса пырать.

Ҫапла калать Алексеев юлташ Конституци панӑ правӑпа усӑ курни ҫинчен.

Киров ячӗпе тӑракан колхоз членӗн Варвара Ивановӑн упӑшки фронтра вилсен, вӑл нумай ачапа тӑрса юлнӑ. Ӗлӗк пулсан вӑл ачисене ҫавӑтса ялсем тӑрӑх ыйткалама тухса кайнӑ пулӗччӗ. Халӗ государство ӑна пособи парса пулӑшать. Вӑл кашни уйӑхрах 112 тенкӗ укҫа илсе тӑрать Ҫемье колхозра тӑрӑшса ӗҫлет, тулӑх пурнӑҫпа пурӑнать. Инвалидсемпе ӗҫлеймн пулнӑ ватӑ ҫынсене районти колхозсенчи пулӑшу кассисем урлӑ 20 пин тенкӗлӗх ытла апат-ҫимӗҫ парса пулӑшнӑ.

Арҫуракасси Екатерина Алексеевӑн упӑшки иртнӗ вӑрҫӑра вилнӗ, хӑйӗн икӗ куҫӗ те курми пулнӑ. Ҫак ҫемьене колхозри пулӑшу касси ҫӗнӗ пӳрт лартса пачӗ, Калас пулать, ӗлӗк вӑл хура пӳртре пурӑннӑ. Димитров ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗнчи ватӑлса ӗҫлейми пулнӑ Дария Александрова колхозницӑна та кӗҫех колхоз лартса панӑ ҫӗнӗ пӳрте пурӑнма куҫмалла.

Пирӗн ҫӗршывра ӗҫсӗрлӗх ҫук. Совет влаҫӗ инвалидсене ӗҫе вырнаҫтарас тата вӗсен квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе куллен тӑрӑшать. Районти социальнӑй обеспечени пайӗ урлӑ инвалидсенчен чылайӑшне тӗрлӗ профшкулсене вӗренме янӑ. «Красное Шатьма» колхоз членӗ, вӑрҫӑ инвалидӗ Н. Михайлов Ивановӑри профшкултан ҫӗвӗ ӗҫне вӗренсе тухрӗ. Халӗ вӑл Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан ҫӗвӗ фабрикинче закройщик пулса ӗҫлет Кун пек тӗслӗхсем татах та илсе кӑтартма пулать.

Инвалидсемшӗн тӑрӑшнине вӗсене санаторисемпе курортсене, кану ҫурчӗсене янипе те уҫҫӑн кӑтартса парать. Районта кӑҫал 20 инвалид санаторисенче, вӗсен 12 ачи пионер лагерӗсенче пулнӑ.

Совет государстви ача амӑшӗсемшӗн те тимлӗн тӑрӑшать. Кӑҫалхи вунӑ уйӑх хушшинче кӑна районти нумай ачаллӑ амӑшӗсене 1.250 пин тенкӗ ытла пособи панӑ.

П. МИРСКИЙ.

Красноармейски районӗ.

Ҫартан таврӑнсан...

[illegible] киленле таврӑннӑ чух[illegible] темӗнле ҫав тери ӑшӑ [illegible] хӑпарать, чӗре хӑвӑрт[illegible] тытӑнать.

[illegible]ӑ, суралнӑ ял—Зеленовка! [illegible] пулмасть вӗсен колхозӗ [illegible] Сталин ячӗпе тӑракан колхоз[illegible]ччӗ. Ҫарта чухне Храм[illegible] лайӑхах пӗлсе тӑнӑ. [illegible] Ксенофонтович Коротковӑн [illegible] тухакан хаҫатсенче [illegible] пынӑ, отпуска килсе кайнӑ. [illegible] пурнӗрех лайӑх мар.

[illegible] Мӗнле ҫӗнӗ ӗҫсем тунӑ[illegible] ӑрамӗсене икӗ пӗ[illegible] ҫак шухӑшсем Храмкина [illegible]

[illegible] вырӑкан машина та вӑраххӑн туйӑнать ӑна паян. Тӑван [illegible] патнелле ҫитеспе вӑл [illegible] аса илчӗ. Малтанхи ҫул [illegible] трактор плугӗпе ӗҫлерӗ. [illegible] нумай трактористсем вӑр[illegible]ӗҫ. Сашӑн вара трактор [illegible] тӳрӗ. Унӑн савнӑ тусӗ, [illegible] Дуся Смирнова та трак[illegible] тӑчӗ. Мӗн каласси пур, [illegible]

[illegible] хӑй сисмесӗрех вӑл «Мӑнтарӑн хӗрӗсем,—тет вӑл [illegible] трактора аран-аран хута [illegible] мар ҫав ӗнтӗ, —

[illegible] ачисене те ун чух[illegible] чухӑм. Государство ҫӗнӗ [illegible] параймастчӗ,—тракторсем [illegible] тунӑ-ҫке-ха. Запасла [illegible]. Трактор ҫурт[illegible] туха-туха сирпӗ[illegible] вара трактористсем хутпа [illegible] лартатчӗҫ,—хучӗ ҫун[illegible] тухса сирпӗ[illegible] ытти чӑрмавсем! Пӗ[illegible] ҫемрелсе кашни-пе, пӗр тракторӑн коленчатӑй валне пӑсса параканччӗ. Ҫӗнӗ вал тупма ҫук. Киввинех тӑваттӑн тӑватӑ талӑк хушши пӗр сывӑрмасӑр рашпильпе хӑйрама тивнӗччӗ. Пӗр-пӗр юлташӗ хӑйранӑ ҫӗртех ҫывӑрса кайсан, ыттисем ӑна айӑккинчен тӗртсе вӑрататчӗҫ. Ывӑрччӗ, питӗ ывӑрччӗ. Анчах вӗсем нимӗнле йывӑрлӑха та парӑнман. Вӑрҫӑ пӗтрӗ. Государство ҫӗнӗ тракторсем тума тытӑнчӗ. Трактористсем, пурте мар пулин те, тӑван уй-хире таврӑнчӗҫ. Вӗсен хушшинче Иван Тимофеевич Пронькин та пур. Вӑл кашт ухсахлакалать, туяпа ҫӳрет. Вӗсех унӑн аллине трактор-бригада параҫҫӗ.

Мирлӗ те хӗрӳллӗ ӗҫ кунӗсем. Хӑйсен паттӑр ӗҫӗсемшӗн Пронькин—Социализмла Ӗҫ Геройӗ ятне, Храмкин—малтан Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ, унтан Ленин орденӗ илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Ҫаксене аса илсе пынӑ май, Саша Храмкин хӑйсен ялӗ патне ҫитсе тӑнине те сисеймерӗ. Акӑ хирте ҫамрӑк вӑрман тӑрӑхӗ тӑсӑлса выртать. Ӑна лартнӑ ҫӗрте Саша та ӗҫленӗ Бӑранташ пек кӑначчӗ йывӑҫ вуллисем... Халӗ, курӑр ӗнтӗ, унта вӑрман кашласа ӳсет. Саша хӑйӗн тракторне шӑлнӗ аллине парса хӑварнӑччӗ. Мӗнле-ши, Миша, чиперех ӗҫлет-ши?..

...Хавасла тӗлпулу. Икӗ пӗчӗк ывӑлӗ Сашӑн хулпуҫҫийӗ ҫине улӑха-улӑха лараҫҫӗ, картуз ҫинчи ҫӑлтӑра, ашшӗн кӑкӑрӗ ҫинчи «Гварди» значокне тыта-тыта пӑхаҫҫӗ. Арӑмӗ. Дуся, сарлака хул-ҫурӑмлӑ, уҫӑ та таса сӑн-сӑпатлӑ упӑшки ҫине савӑнса пӑхса тӑрать.

Тепӗр кун ирех Саша Храмкин Кольцовкӑра ӗҫлекен трактор бригадине тухса каять. Унӑн хӑйӗн бригадирӗпе Иван Тимофеевич Пронькинпа тӗл пулса калаҫмалла. Ҫапӑҫӑва вӑл ҫак бригадӑран кайнӑ-ҫке-ха. Мӗнлерех-ши халь бригада ӗҫсем?.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: А. К. Храмкин (сулахайра) тата трактор бригадин бригадирӗ Социализмла Ӗҫ Геройӗ И. Т. Пронькин юлташсем.

С. ВИКТОРИНОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Правленире Пронькин фермӑна тухса кайни ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Акӑ Саша Храмкин фермӑсем патнелле утать. Мӗскер ку? Ҫӗнӗ хуҫа мар-и? Халӗ кирпӗчрен хывнӑ тем пысӑк ҫӳлӗш силос башнисем, ҫур ҫухрӑма яхӑн тӑсӑлакан чул витесем лараҫҫӗ, силос башнисем патӗнчен витесем патнелле ансӑр чугун ҫулсем тӑсӑлаҫҫӗ.

Сашӑна пӗри таврӑннӑ ятпа ырӑ сунса саламлать. Вӑл ҫак чаплӑ ҫуртсем хушшинче чӑннипех те аташса кайнине никам та асӑрхамасть-ха. Саша ҫамки ҫинчи тарпе тутӑрпа шӑла-шӑла илет те Иван Тимофеевич Пронькин ӑҫтине ыйтать.

— Ферма ҫуртне, Доманин патне кӗчӗ пулас,—теҫҫӗ ӑна.

— Ӑҫтарах вара ферма ҫурчӗ?

— Авӑ, лере, силос башнисенчен иртсессӗн...

Храмкин, малтанхи хут пысӑк хулана пырса кӗнӗ ҫын пек, ун-кун пӑхкаласа, пӗр ҫурт патӗнчен тепӗр ҫурт патнелле утать. Акӑ вӑл тултан клуб пек курӑнакан ҫурта пырса кӗрет. Ӑна ҫийӗнчех палласа илеймен ҫамрӑк хӗрача унран пропуск ыйтать.

— Мӗнле пропуск?

— Фермӑсене кӗрсе ҫӳреме...

— Мана Пронькин кирлӗччӗ... Иван Тимофеевич... Кунта мӗн вара сирӗн?

— Ку пирӗн кормокухня.

— Эпӗ ферма ҫуртне тупаймарӑм-ха.

— Вӑл, авӑ, лере!..

Йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ сержант юлашкинчен ферма кантурне тупать-тупатех. Иван Тимофеевич ӑна ыталаса илет те пӗр икӗ хутчен ҫурӑмӗнчен чышкалать.

— Таврӑнтӑн иккен богатырь! Ну, ӑҫта пултӑн, мӗнле служить турӑн? Каласа пар.

Саша Храмкин хӑйӗн бригадирне пӗтӗмпех тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парать, Мускав округӗнчи ҫар командующийӗ алӑ пуснӑ «Мухтав грамотине» те кӑларса кӑтартать.

— Ята ямарӑн, бригадир юлташ! Халь кунти ӗҫсем ҫинчен пӗлес килет. Ҫавӑнпа сана тупма васкарӑм та,—тет вӑл, сӗтел патнерех куҫса ларса.

Калаҫу нумайччен пырать. Саша ҫарта пулнӑ чухне ун бригадинчи ҫынсем те, колхозниксем те ахаль ларман. Вӗсем вӑйлӑ тырпулшӑн, йышлӑ та тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешнӗ. Пронькинӑн трактор бригади ӗҫлекен Кольцовка колхозӗ кӑҫал кашни гектартан 32-шер центнер ҫурхи тулӑ, 18,5-шер центнер ырӑш, 22-шер центнер пӑрса, 19-шар центнер сӗлӗ; 73-шер центнер клевер утӑ, 800-шер центнер выльӑх кишӗрӗ тухӑ илнӗ. Колхоз витисенче халӗ ӗнтӗ 227 лаша, 405 пуҫ ӗне выльӑх, 1.007 сысна, 914 сурӑх, 4.210 пуҫ кайӑк-кӗшӗк.

— Куратӑн-и Саша, епле пирӗн ӗҫсем?—хавхаланса ыйтать бригадир. — Колхозӑн кӑҫалхи пӗтӗм тупӑшӗ икӗ миллионтан та иртет. Давай, шинеле хыв та ҫак та трактор ҫине лар.

Саша Храмкин бригадир каласа панисене питӗ тимлӗн итлесе ларчӗ. Хӑйсен колхозӗ, ҫавӑн пекех районти ытти колхозсем те ӳссе, тӗрекленсе пынине питех те савӑнтарчӗ ӑна. Анчах пӗр шухӑш, ҫартан килме тухсанах ҫуралнӑ шухӑш, ӑна пӗр самантлӑха та канӑҫ памасть.

— Сан бригадӑра халь миҫе трактор терӗн-ха?—тепӗр хут ыйтать Саша.

— Ҫичӗ трактор, пурӗ 202 лаша вӑйӗ,—малтанхи пекех хавасланса ответ парать Иван Тимофеевич.

— Ҫичӗ трактор! А эпӗ ҫара кайиччен пӗр тракторпах пӗтӗм Кольцовка уй-хирне сухаласа тӑкаттӑм. Тракторӗ те — урапалли кӑначчӗ. Халь авӑ...

— Вара мӗн?—тем сиснӗ пек, ҫийӗнчех ыйтать бригадир.

— Вара-и? Вара мӗн ӗҫлӗпӗр-ха эпир ун чухлӗ тракторсемпе? Пирӗн ҫӗр питӗ сахал-ҫке. Мана ҫав шухӑшлаттарать. Манӑн трактор рульне тытас та «Бывали дни...» юрласа ларас-и? Ҫук пулӗ, Иван Тимофеевич, манран текех тракторист пулмасть пулӗ. Урӑх ӗҫ шырамалла.

Пронькин ҫак сӑмахсене итлесе ларчӗ-ларчӗ те сасартӑк ура ҫине сиксе тӑчӗ.

— «Бывали дни!»—терӗ вӑл, Храмкин патнелле ухсахласа пырса.—Мӗнле ҫӗр сахал? Мӗнле урӑх ӗҫ?

— Сахал ҫав. Манӑн ӗҫсӗр ларас килмест.

Кунта бригадир сасартӑк вӗриленсе кайрӗ.

— Ха эс ӑна—ҫӗр сахал! Эпӗ суха ансах тӑрсе пулсан, хамӑн тракторсемпе Канаш таранах сухаласа пӑрахма пултаратӑп.

— Чим-ха, эс [illegible] кай-ха, Иван Тимофеевич,—пуҫлат [illegible] Храмкин.—Эпӗ, тен, ӑнланса ҫитейместӗп.

— Ҫитейместӗн кӑна мар, нимӗн те ӑнланмастӑн эсе,—сассине хӑпартсах кастарма тытӑнать бригадир.—Ҫапӑҫма кайиччен эсӗ хӑвӑн трактӑрупа суха тунӑ та тырӑ акнӑ, унтан авӑн ҫапнӑ. Урӑх ним ӗҫ тӑвӑнне те пӗлмен. Халӗ вӑл вӑхӑтсем иртсе кайрӗҫ. Комплексла механизаци! Илтнӗ-и эсӗ ҫав сӑмаха? Халӗ ӗнтӗ пур ӗҫе те машинӑпа тӑватпӑр. Тырӑ вырса ҫапатпӑр, ҫум ҫумлатпӑр, ҫӗрулми лартатпӑр та кӑларатпӑр, кӑрансем купалатпӑр, тислӗк, йывӑҫ, кирпӗч, выльӑх апачӗ, удобрени турттаратпӑр. Государство пирӗн пуян, ҫулсерен ҫӗнӗрен ҫӗнӗ машинӑсем парса тӑрать. Фермӑна кӗрсе куртӑн-и-ха эсӗ? Кӗҫех витесем тӑрӑх вагонеткӑсем ҫӳреме тытӑнаҫҫӗ. Выльӑх апатне ытампа ҫӗклес, тислӗке носилкӑсемпе йӑтас вӑхӑтсем иртсе кайрӗҫ... Ҫӗр сахал! Мӗн эсӗ ӗлӗкхи ҫӗр улпучӗ-им?

— Юрӗ-ха, хӑплан, Иван Тимофеевич,—именнӗн пӳлет ӑна Храмкин.—Эпӗ урапаллӑ тракторпа ӗҫленӗ-ҫке. Халӗ сирӗн гусеничнӑйсем. Эпӗ вӗсемпе ӗҫлесе курман.

— Вӑт ҫапла кала та,—сасартӑках лӑпланать бригадир.—Тупнӑ сӑмах—ҫӗр сахал. Ҫӗр мар, пӗлӳ сахал. Кӗҫех Канашра курс уҫӑлать. Ыранах МТС-а кай та директорпа калаҫ.

Храмкин килӗшет. Кӗтмен ҫӗртен чӗрре кӗрсе кая пуҫланӑ калаҫу мирпе татӑлать. Юлташсем пӗр-пӗрин аллине хытӑн тытса чӑмӑртаҫҫӗ те уйрӑлаҫҫӗ.

Акӑ Саша Кольцовкӑран Зеленовка енелле утать. Хире каҫ ӗнтрӗкӗ сапнӑ. Инҫетре питех курӑнмасть те ӗнтӗ. Анчах тин пулса иртнӗ хӗрӳ калаҫу хыҫҫӑн салтакӑн куҫӗ сасартӑк ҫӗнелле уҫӑлнӑ пек пулчӗ. Ун умне халӗ ӗнтӗ пысӑк хирсем ҫӗр сарӑлса выртать.

— Ҫӗр сахал мар. Аслӑ вӑл, пирӗн,—терӗ хӑй ӑшӗнче Храмкин тракторист.—[illegible]

Арсений ЭСХЕЛЬ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ

Декабрĕн 2-мĕшĕнчи кăнтăрлахи пĕрлехи лару

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнерхи кăнтăрлахи пĕрлехи ларура Генеральнăй Ассамблея Америка делегацийĕ «тискер ĕçсем» çинчен тăратнă влеклĕ ыйтăвĕ пирки пĕтĕмĕшле дискусси вĕçленĕ. Çав «тискер ĕçсене» Корейăпа Китай енĕ тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе тунă пулать.

Белоруссия ССР делегацийĕн пуçлăхĕ К. В. Киселев хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: халăхи вăхăтри йывăр ларутăрăва татах ÿстерессишĕн, тĕнчери кирлĕ ыйтусене, чи малтанах, Корея ыйтăвне, мирлĕ майпа татса парассине йывăрлатассишĕн тăракансем элек сараççĕ, фактсене пăсса кăтартаççĕ, тĕрлĕ суя шухăшсем шутласа кăлараççĕ. «Тискер ĕçсем» çинчен шухăшласа кăларнă ыйту çакна уççăн çирĕплетсе парать. Корея ыйтăвĕ тĕлĕшпе пухăнмалли конференци çинчен татса памалла вăхăтра ахальтен мар ĕнтĕ çак киревсĕр ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăна йышăнтарма тăратнă.

Ун хыççăн США представителĕ Лодж тухса каланă. Вăл хăшпĕр делегатсем, вăл шутра СССР представителĕ Америкăн суя ыйтăвĕ çинчен каланисем пирки ответ пама пулнă. Анчах вăл А. Я. Вышинский хăйĕн сăмахĕнче суя ыйтăва айăпласа каланă фактсем пирки пĕр сăмах та шарламан, ытти делегатсем критиклесе калани çине ответ парассинчен те пăраннă. Лодж Совет Союзĕ, Китай Халăх Республики тата Демократиллĕ Корея Халăх Республики çинчен элеклĕ сăмахсем кăна каланă. Юлашкинчен США представителĕ çакăн пек ыйту лартнă: «тискер ĕçсене» кăтартса паракан фактсене тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе Совет Союзĕ Хĕрлĕ Хĕресĕн пĕтĕм тĕнчери комиссине тума килĕшет-и?

А. Я. Вышинский çапла каланă: Америка представителĕ «тискер ĕçсем» çинчен калакан «фактсене тĕпчесе пĕлес» тĕлĕшпе комисси тăвасси çинчен панă сĕнÿ пĕтĕмĕшпех ултавлă ĕç пулса тăрать. Лодж чăннипе илсен, тĕпчесе пĕлесси çинчен нимĕн те шухăшламасть. Америка правительстви, тенĕ А. Я. Вышинский, кун пек тĕпчесе пĕлме кирли çинчен чăннипех шухăшлать пулсан, мĕншĕн вăл 1950 çулхи августпа сентябрь уйăхĕсенче Хăрушсăрлăх Советне тăратнă сĕнÿсене йышăнмарĕ-ха? США-н хĕçпăшаллă вăйĕсем çурçĕр корейцсемпе Китай халăх добровольцĕсем тĕлĕшпе тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлес пирки Хăрушсăрлăх Совечĕ мерăсем йышăнтăр, тесе, СССР требованисем лартнă чухне мĕншĕн-ха çав требовани çине пăхмарĕç? США, тенĕ малалла СССР представителĕ, чăннипех кун пек тĕпчесе пĕлессине туса ирттерессишĕн тăнă пулсан, унăн кун пек комисси тăвасси çинчен сĕнÿ пама, кун пек тĕпчесе пĕлес ĕçе чăннипех нимăн майлă та тăман комиссие хушма майсем нумай пулнă.

Малалла А. Я. Вышинский делегатсене çакăн çинчен аса илтернĕ: совет делегацийĕ тата ытти чылай делегацисем айăплаша каланисем çине ответ парассинчен Лодж тĕрлĕ майпа пăрăнма хăтланать. Совет делегацийĕ тата ытти делегацисем США-н оборона министерстви «тискер ĕçсем» çинчен тунă «доклачĕнче» фактсене суйса, пăсса кăтартнине, нихçан пулман фактсем шухăшласа кăларнине кăтартса панă. А. Я. Вышинский çакна палăртнă: США представителĕ тата ун майлă тăракан ытти делегатсем Корейăпа Китай енĕ «ООН-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсен» тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе тискер ĕçсем тунине кăтартса пама хăтланчĕç, анчах ун пек тума пултараймарĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем Совет Союзĕ, Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республики çинчен элеклеççĕ.

Корейăри перемири пирки

ПЕКИН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин специальнăй корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 2-мĕшĕнче Америка енĕ пĕр секторта Кăнтăр Корейăн тыткăнри çар çыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне тума тытăннă. Ăнлантару ĕçне тума чылайранпах хатĕрленнĕ пулнă. Ăнлантару ĕçне хутшăнтарнă 30 çар çыннинчен пĕри те, вĕсене тем тĕрлĕ «ÿкĕтленине» тата «илĕртнине» пăхмасăр, репатриациленме килĕшмен. Тыткăнри çар çыннисенчен нумайăшĕ çапла пĕлтернĕ: Корейăпа Китай енĕ вĕсене пĕр хутчен кăна мар киле таврăнма кирли çинчен ĕнентерме тăрашнă. Анчах тĕплĕн шухăшланă хыççăн вĕсем Çурçĕр Корейăра юлма йышăннă.

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРИ ХАÇАТ АМЕРИКĂН ИСПАНИРИ ÇАР БАЗИСЕМ ÇИНЧЕН

ВЕНА, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германири «Зюддейче цейтунг» хаçат статья пичетлесе кăларнă. Унта Испани территорийĕнчи çар базисем çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Пурнăçа пулмасть çар килĕшĕвĕ тунă май американецсем çав базăсемпе усă кураççĕ.

Америкăн Мадридри посольствин информаци бюллетенĕ, тесе çырать хаçат, Испани аэродромĕсен обзорлă карттине пичетлесе кăларнă. Çав аэродромсене нумаях пулмасть Америкăн авиаци министрĕ Талботт пăхса тухнă. Сăмах Сарагоса çывăхĕнчи Генерал Санхурхори, Мадрид патĕнчи Торрехонри, Севилья çывăхĕнчи Моронри аэродромсем çинчен пырать. Унсăр пуçне, Америка эксперчĕсем Испанин Эль-Копперори летчиксем хатĕрлекен шкула пырса курнă. Вăл шкул Севилья çывăхĕнче вырнаçнă. Эль-Копперо Испани летчикĕсене Америка самолечĕсем çинче вĕçме вĕрентекен центр пулса тăмалла. Моронри аэродромпа тата Андалузире вырнаçнă тепĕр аэродромпа инçете вĕçекен бомбардировщиксем валли усă курма палăртаççĕ. Вăл бомбардировщиксене Испанире туса кăларма тытăнаççĕ. Разведка тăвакан авиацин тĕп пункчĕ Мадрид çывăхĕнчи Торрефонри аэродром пулмалла. Çак пунктран разведка тăвакан авиаци валли Хĕвеланăç Европăри чи пысăк тата лайăхлатнă аэродромсенчен пĕрне туса хума палăртнă.

Испанипе Пĕрлешÿллĕ Штатсем, тĕпрен илсен, тинĕс-çар базисемпе усă курас ыйтупа малашне сыхăнса ĕçлесси çинчен килĕшÿ тума калаçса татăлнă. Испанин тăватă çар портне Америкăн тинĕс-çар вăйĕсен аллине параççĕ. Америкăн Атлантикăри флочĕ Атлантикăра Эль-Ферроль порчĕсĕр пуçне Кадис порчĕпе усă курма тытăнать. Унта авианосецсем тăмалли вырăн тума палăртса хунă. Вăтаçĕр тинĕсре американецсем Балеарски утравĕсем çинче Маонри кивĕ çар порчĕсемпе тата Картахен порчĕпе усă курма тытăнаççĕ. Унти тинĕс-çар верфьне чылай çĕнетсе лайăхлатаççĕ. Картахенра Америкăн Европăра тăракан мĕншур çар судисене, авианосецсемпе линейнăй карапсенсĕр пуçне юсама тытăнаççĕ. Пĕрлешÿллĕ Штатсем çак плансене хăвăртрах пурнăçа кĕртме тăрашаççĕ...

Буржуалла Чехословакире гражданла авиаци самолечĕсене капиталистсен шултра компанийĕсем çĕç усă курнă. 1945 çулта çĕршыва ирĕке кăларнă хыççăн, Чехословаки республикин гражданла авиацийĕ аталанса пыма тытăннă. Çĕршывра çĕнĕ аэродромсем тунă, кивĕ аэродромсене çĕнĕ техникăпа пуянлатнă. Гражданла авиаци çĕнĕ пурнăç строительствин задачисене пурнăçласа пырать. Самолетсемпе грузсем турттарасси тата пассажирсем лартса çÿресси çулленех ÿссе пырать.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Прагăри Рузыни аэродромĕнче. ЛИ-2 самолет сывлăша вĕçсе хăпарас умĕн.

Чехословаки телеграф агентствин фотоÿкерчĕкĕ.

ПОЛЬШĂРИ ЯЛСЕНЧЕ

ВАРШАВА, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри хресченсен культурăлла шайĕ вĕçĕмсĕр ÿссе пырать.

Вăрçăччен Польшăра 17 ял пуçне пĕр шкул тивнĕ пулсан, халăхри вăхăтра кашни тăваттăмĕш ялта 7 çул вĕренмелли шкул пур. Мĕнпур хресчен ачисем пуçламăш шкулсенче вĕренеççĕ. Халĕ çĕршыври ялсенче 50 пин вĕренекен валли çĕнĕ шкулсем тăваççĕ.

Вăрçăччен Польшăри ялсенче пĕр библиотека та пулман. Халăхи вăхăтра кашни вулăс пуçне вăтам шутпа виçĕ библиотека тивет. Буржуалла Польшăра ялсенче пĕр клуб та пулман, иртнĕ çул вĕçленнĕ тĕле ялсенче 11.500 клуб шутланнă. Польшăри ялсенче вăрçăччен кинотеатрсем те пулман. Халăхи вăхăтра ялсенче стационарлă кинотеатрсем пин ытла тата кинопередвижкăсем 200 ытла шутланаççĕ.

Производствăлла çĕрĕç кооперативĕсенче те строительство ĕçĕ анлăн саралса пырать. Ултăçуллăхăн малтанхи виçĕ çулĕ хушшинче кооперативсенче ултă пине яхăн сурт-йĕр туса лартнă. Кăçал тата 5.170 çурт-йĕр туса пĕтереççĕ. Çавăн пекех производствăлла çĕрĕç кооперативĕсен членĕсем хăйсем валли пурăнмалли çуртсем тăваççĕ.

Вьетнам ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине хирĕç тăракансем

ПАРИЖ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕнчери общественность, уйрăммăнах Франции общественность, Демократилле Вьетнам Республикин президенчĕ Хо Ши Мин пĕлтернине пысăк тимлĕхпе кĕтсе илнĕ. Хо Ши Мин перемири тăвасси çинчен калаçусем ирттерме хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах ют çĕршывсенчи хаçатсенче пичетленсе тухнă пĕлтернисем çакна кăтартса пареççĕ: хăшпĕр ушкăнсем, чи малтанах США-ри ушкăнсем, Индо-Китай ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине хирĕç тăраççĕ.

«Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: Хо Ши Мин пĕлтернĕ пирки Вашингтонра «хытă пăшăрханаççĕ». Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтонра çапла шутлаççĕ: калаçусем пулас пулсан, хĕçсем ташманĕнчен вăйлăрах пулас тесе. Франциипе Индо-Китайри пуканелле государствăсен, хăйсен вăйĕсене темиçе хут ÿстермелле США хăй енчен çак ĕç валли кирлĕ таран финанс «пулăшăвĕ» пама хатĕр. Ют çĕршывсенчи хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Индо-Китай çинчен тăракан ыйтăва хĕвеланăçĕнчи виçĕ державăн Бермуд утравĕсем çинче пулмалли сепаратнăй канашлăвĕнче сÿтсе явмалла.

Хо Ши Мин пĕлтерни Индо-Китайри пуканелле государствăсенчи влаçра тăракан ушкăнсене, пуринчен ытла баодаевецсене, пăшăрхантарнă. Пуканелле император Бао Дай тата унăн кабинечĕ пĕлтерÿсем пичетлесе кăларма васканă. Унта вĕсем калаçусене хирĕç тăраççĕ. Пуканелле Кхмер государствин премьер-министрĕ Чан Нак та калаçусене хирĕç тăрса пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă.

Хо Ши Мин пĕлтерни Англин Малайăри колонизаторĕсене те хытă пăшăрхантарать. Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Сингапуртан пĕлтернĕ тăрăх, Малайăри тата Сингапурти политикăлла ушкăнсем Индо-Китайра пулма пултаракан калаçусем çинчен пĕлтернисене питĕ пăшăрханса сăнаса пыраççĕ. Çак ушкăнсенче Индо-Китайри перемирие «вăрçа малалла тăсса пырассинчен те хăрушăрах ĕç» тесе шутлаççĕ. Хо Ши Мин пĕлтерни Англин Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи официальнăй представителĕсен Сингапурти канашлăвĕнчи тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăрĕ, тесе кăтартса парать корреспондент.

Индири хаçатсем Совет Союзĕ Пакистана панă нота çинчен мĕн çыраççĕ

ДЕЛИ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Делира ирхине тухакан хаçатсем пĕрремĕш страницăсенче Совет Союзĕ Пакистана панă нотăна пичетлесе кăларнă.

«Индиан экспресс» хаçат çапла пĕлтерет: совет нотипе «Делири парламент ушкăнĕсем питĕ интересленеççĕ». «Хиндустан таймс» хаçат совет ноти çинчен ырласа асăнса, çапла палăртать: ку вăл Пакистана килĕшет-и, килĕшмест-и, анчах унăн кÿршисем «кун евĕрлĕ ĕçсемпе малашне те хытă интересленĕç».

Лакнау хулинче тухса тăракан «Пипл» хаçат: Пакистанпа Америка хушшинчи çар калаçăвĕсем çинчен пĕлтернисем «мире юратакан мĕнпур çынсене хытă пăшăрхантараççĕ», тесе çырать.

Японири рабочисем ĕç укçи ÿстерессишĕн кĕрешеççĕ

ШАНХАЙ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Токиори радио пĕлтернĕ тăрăх Японире рабочисем ĕç укçи ÿстерессишĕн кĕрешĕве вăйлатса пыраççĕ. Çак кĕрешĕве государствăн чугун çулĕсем çинче ĕçлекен рабочисен пĕтĕм Японири профсоюзĕ, почта работникĕсен пĕтĕм Японири союзĕ, государство учрежденийĕсенчи рабочисемпе служащисен профсоюзĕн Пĕтĕм Японири совечĕ, монополилле суту-илĕвĕн корпорацийĕ, телеграфпа телефон работникĕсен профсоюзĕ тата ыттисем те хутшăнаççĕ.

Пассажирсем илсе çÿрекен тата тавар турттаракан поездсем çÿрекен график пĕтĕм çĕршывĕпех пăсăлнă, нумай станцисенче ĕç чарăнса ларнăпа пĕрех. Декабрĕн 1-мĕшĕнче 62 чугун çул составĕ çÿремен. Япони влаçĕсен ĕç укçи ÿстерме требовани лартакан чугун çул работникĕсене хăратса вĕсен кĕрешĕвне чарса лартма хăтланаççĕ. Çапла, государство чугун çулĕсен Японири компанийĕн генеральнăй директорĕ Сонносукэ Нагасаки, Японири министрсен кабинечĕн членĕсемпе васкавлă канашлу ирттернĕ хыççăн, «ультиматум» пичетлесе кăларнă. Унта вăл рабочисем хăйсен кĕрешĕвне чарса лартмасан, вĕсем тĕлĕшпе «тивĕçлĕ мерăсем» йышăнассипе хăратать.

Радио малалла çапла пĕлтерет: çыхăну работникĕсен пĕтĕм Японири союзĕ кĕрешĕве хутшăннине пула, çĕршыври тĕп почта кантурĕсенче ăсатман корреспонденцисем питĕ нумай пухăннă. Токиори Центральнăй почта кантурĕнче кăна 18 миллион çыру тата 130 пин посылка выртать.

Ĕç укçи ÿстерессишĕн пыракан кĕрешĕве «Нихон сейко», «Фудзи сейтецу» тата «Явата сейтецу» ятлă пысăк металлурги компанийĕсем аллинче тăракан виçĕ металлурги заводĕнчи рабочисен профсоюзĕсем те хутшăннă.

АНГЛИРИ ЗАБАСТОВКА

ЛОНДОН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 3-мĕшĕнчи ирхине Англири машинăсем тăвакан тата судносем тăвакан промышленноçри рабочисен 24 сехете пынă забастовки вĕçленнĕ. Забастовкăна Машинăсем тăвакан тата суднăсем тăвакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕн конфедерацийĕ организацилеnĕ пулнă. Забастовкăна çĕршыври 4.250 предприятири икĕ миллион ытла рабочи хутшăннă.

Мосаддыка суд туни

ТЕГЕРАН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Мосаддыкпа Иран çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Рияхи генерал ĕçне пăхса тухакан судра ноябрĕн 30-мĕшĕнчи ласхине, декабрĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче Мосаддык суд председателĕ кăçалхи августăн 16-мĕшĕпе 19-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ ĕçсем пирки панă ыйтусем çине ответленĕ.

Уяв ячĕпе

Республикăри ĕçсыннисем ССР Союзĕн Конституци кунне производствăра çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕç. Чылай предприятисен коллективĕсем çулталăкри плана ăнăçлă пурнăçланă.

Çак кунсенче хуласенче ялсенче, машина-трактор станцийĕсемпе колхозсенче СССР Конституци кунĕ çинчен доклад-семпе калаçусем ирттереççĕ. Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăра уяв ячĕпе пысăк витрина тунă. Унта пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв хуçалăхпа культура строительствинче тунă çитĕнÿсене кăтартакан тата конституципе çирĕплетнĕ правăсем совет граждан-ĕсене тĕлейлĕ те савăнăçлă пурнăç парине кăтартакан материалсем чылай. Çакăн пек витринăсем хуларн ытти библиотекăсенче те йĕркеленĕ.

Конституци кунĕ ячĕпе хулари предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Театрсемпе клубсенче художествăлла пултарулăх коллективĕсем концертсем параççĕ, уяв ячĕпе тĕрлĕ кинокартинăсем кăтартаççĕ. Шупашкарти ДОСААФ оргкомитечĕ тĕл перекенсен ăмăртăвне ирттерет. Хулари физкультурниксем спортăн массăллă вăййисене хутшăнаççĕ.

Çирĕм çул çыхăну ĕçĕнче

ЧУРАЧАК. «Прогресс» колхозри почтальон Е. Артемьев юлташ çыхăну ĕçĕнче пĕр татăлмасăр çирĕм çул ĕçлет. Колхозниксем хăйсен юратнă почтальонне тахçанах пĕлеççĕ. Вăл, утмăл çултан иртнĕ пулин те, хăй юратнă ĕçе пăрахмасть.

Почтальон уйрăмах хаçат-журнал сарас ĕçе аван йĕркеленĕ. Ял çыннисем хушшинче 3 пин тенкĕлĕх ытла хаçат-журнал сарнă.

Чурачăк районĕнчи çыхăну уйрăмĕ ăна грамота панă. Л. КУЗЬМИН.

208 киле—322 экземпляр хаçат-журнал

ЧКАЛОВСКИ. Туçа ялĕнчи П. Табаков почтальон ĕçсыннисем хушшинче хаçат журнал сарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕ кашни çулах преми илет. Вăл иртнĕ çул 208 киле 400 экземпляр ытла хаçат-журнал парса тăнă.

П. Табаков юлташ кăçал та тăрăшса ĕçлет. Вăл çак ялта çитес çул илсе тăма 322 экземпляр хаçат-журнал сарнă. Хаçат-журнал сарас ĕç малалла пырать. И. МЕШКОВ.

Страховка укçи пухас ĕçре малта пыракансем

Тăваттăмĕш кварталта страховка укçи пухмалли плана республика декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 70,4 процент [illegible] Госстрахăн Банаш хулинчи (аслă инспектор А. А. Ш[illegible]) квартал планне 104,1 пр[illegible] хулинчи инспекци (аслă и[illegible] Малин вская юлташ) 89,2 [illegible] пăсларĕç.

Страховка укçи пухас ĕ[illegible] Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар[illegible] ăнăçлă пырать. И. ЗО[illegible]

Вкладсен хисепĕ [illegible]

ШĂХАСАН. Ямашри сы[illegible] суммĕнчи перекет кассин [illegible] агентствинчи перекет [illegible] лизмла ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту[illegible] çыхăну уйрăмĕнчи перекет [illegible] пырать. Ку перекет касси кварталта çĕнĕрен вкладчик[illegible] тармалли тата вкладсен су[illegible] мелли заданисене ирттерсе[illegible]

Перекет касси çулталăк[illegible] хисепне ÿстермелли плана [illegible] се тултарчĕ, республикăри [illegible] рекет кассин ятне илме т[illegible] Х[illegible]

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ТУ[illegible]

ЕНЧĔК. Çĕнĕ Пăва ял Со[illegible] нисем, партипе правительс[illegible] пăсĕшĕн тăрăшнине хавх[illegible] чĕрлĕх нумай тунаççĕ.

Çак кунсенче Л. Арл[illegible] нова, Е. Павлова тата ытт[illegible] хуçалăх ĕне туянчĕç. Ял ç[illegible] кан ытти выльăх-чĕрлĕх [illegible] пырать. В. [illegible]

Вăрманти çĕнĕ поселокра

Чугун çул хĕрринчи автокран патне «ЗИС» пырса тăчĕ. Ун çине сахалтан та вунă кубометр вутăлăх йывăç тиенĕ. Автомашинăран кăкарнă прицеп çинче те вутă чылай. Кунта нумайранпа ĕçлекен Федор Кутузов шофер хăйĕн машинин çине мĕн чухлĕ тиемеллине лайăх пĕлет. Кунпа пĕрлех вăл кашни сехетпе тулли усă курма тăрăшать.

— Хăвăртрах! Хăвăртрах пушатасчĕ,—васкатрĕ вăл тин çеç пĕрле пухăнса пирус чĕртсе янă çамрăксене. Рабочисем унăн машинине хăвăрт пушатрĕç. Çав самантрах вĕсем çав йывăçа платформа çине автокранпа тиеме пуçларĕç. Рабочисенчен пĕри троса пĕренесем айĕпе çавăрса илсе çыхрĕ. Кран 7—8 пĕренене пĕр çĕре пухрĕ, унтан майĕпе çĕкленсе çаврăнчĕ те, платформа çине антарса хучĕ.

Чугун çул хĕрне автомашинăсем час-час пыраççĕ. Пĕрисем вутăлăх йывăç, теприсем—строительство материалĕ илсе тухаççĕ. Кунтан хуласемпе ялсем валли вутă, çĕнĕ стройкăсем валли—пĕрене, чугун çулĕ валли—шпал нумай ăсатаççĕ. Çак ĕçсене тунă чухне вĕсем техникăпа анлă усă кураççĕ. Вĕсен аллинче—нумай тĕрлĕ пуян техника. Кусса çÿрекен электростанцисем, электропăчкăсем, трелевочнăй тракторсем, автокрансем... Партипе правительство вăрман промышленноçне аталантарма, рабочисен ĕç условийĕсене тата вĕсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшаççĕ.

Вăрманти çĕнĕ поселокра—Чернореченски поселокра пулнинчен пире кунта пурăнакансен ĕçĕсемпе палламна тĕл килчĕ.

Чугун çул хĕрринчи уйрăмсен инçĕнне [illegible] метр кайсанах грузовик вăрмана пырса кĕчĕ. Кăç пулса [illegible] пулчĕ[illegible]та, шофер пĕр хушă фарăсене сÿтатмасăрах пычĕ. Умра, поселокăн çĕнĕ урамĕсенче, электричество ламписем йăлтăртатса çунаççĕ.

— Пăхăр-ха мĕнле илемлĕ! Çулла мĕнле!.. Çулла килсе курасчĕ сирĕн!—сăмах хушрĕ шофер хăй пурăнакан поселока мухтаса.

Шофер, çĕнĕ поселокри Карл Маркс урамĕпе малалла пырса, инçене, Дубравнăй еннелле кайса, кусран çухалчĕ.

Урамăн икĕ енĕпе те çĕнĕ çуртсем лараççĕ. Калинин тата Кутузов урамĕсенче те çавах. Хăшпĕр урамсене халĕ ят пама ĕлкĕреймен-ха. Поселок ÿссех пырать.

1930 çулта çак вырăнта пĕртен-пĕр çурт—вăрман объезчикĕн çуртĕ пулнă. Унтан кăшт вăхăт иртсен вăрманта ĕçлекенсем валли бараксем тăва-тăва лартнă. Вăрманпромхозăн кадровăй рабочисем ытларах пултăр тесе 1937—1938 çулсенче кунта уйрăм çуртсем лартма тытăннă. Вăрман варринчи поселок юлашки виçтăватă çулта уйрăмах хăвăрт ÿснĕ.

Поселока Пĕпрес енчен пырса кĕрсен, пĕчĕк çырма хĕрне пырса тухатăн. Çырмара юхса выртакан шыв асра тытса-и тен, поселока «Чернореченски» тесе ят панă. Администраци енĕпе илес пулсан, вăл Пĕпрес поселокĕн пайланни панĕ пулса тăрать. Кунта пурăнакан тата ĕçлекен рабочисемпе служащисем тата интеллигентсем нихо е спектакль курма, лекци е доклад итлеме район центрĕнчи Культура çуртне [illegible] çÿреççĕ. Пысăк уявсенче—район центрĕнчи ĕçсыннисемпе пĕрле демонстрацие тухаççĕ. Çав вăхăтрах çĕнĕ поселокăн хăйĕн асра юлакан лайăх енĕсем нумай.

Çĕнĕ поселок тата ун таврă кашласа ларакан вăрман хĕлле те илемлĕн курăнать.

Рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен, совет интеллигенцийĕн пурнăçĕ лайăхланса пыни çинчен поселокри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница Клавдия Ивановна Христофорова çапла калать:

— Пирĕн поселокра клуб, фельдшер пункчĕ, мунча, пекарня, столовăй, ача ясли тата сачĕ, çĕвĕпе атă-пушмак мастерскойĕсем, парикмахерски пур. Пысăк магазинра, апат-çимĕç продуктсем, промышленность таварĕсем сутаççĕ.

Çичĕ çул вĕренмелли шкулта Христофорова юлташ учительница тата пуçламăш парторганизаци секретарĕ пулса ĕçлет. Поселок ÿссе пынă май, 1950 çулта, çичĕ çул вĕренмелли шкул уçăлнă. Шкулти сакăр класра 216 ача вĕренет, учительсемпе учительницăсем 11 çын.

— Вырăн çитеймениипе пула, — тет Христофорова юлташ,—халĕ ачасене икĕ сменăпа вĕрентме тивет-ха. Çитес вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле шкул валли тепĕр çурт туса лартмалла. Ун чухне вĕренÿ ĕçне тата кружоксен занятийĕсене организацилеме лайăх майсем пулаççĕ. Вĕренме тăрăшакансем нумай. Çавна кура çамрăк рабочисем валли каçхи шкул уçма кĕтĕленетпĕр.

Совет влаçĕ пирĕн çĕршыври пур халăхсене те телейлĕ пĕр çемьене пĕтĕçтерчĕ. Çĕнĕ поселокăн кулленхи пурнăçĕ пирĕн халăхсен туслăхĕ питех те çирĕппине кăтартса парать. Çичĕ çул вĕренмелли шкулта [illegible], чăваш, вырăс, мордва, тутар йăхĕсем [illegible] вĕренеççĕ. СССР Конституцийĕ çине [illegible] сыпăкĕсене çырса хунă вĕренÿ правипе усă курса [illegible] се илессишĕн тăрăшса вĕренеççĕ, пĕр-пĕринпе туслăн пурăнаççĕ.

Шкултан тухсанах клуба пырса кĕретĕп. Клуб заведующийĕ Аркадий Алексеевич Самарин юлташ Улатăрти художество училищинчен вĕренсе тухнă. Вăл клуба илемлетес енĕпе нумай ĕçленĕ. Вăрманта ĕçлекен рабочисемпе ытти ĕçсыннисем пушă вăхăта клубра ирттереççĕ. Клубра эрнере икĕ хутран кая мар кино пулать, художествăлла пултарулăх кружокĕсен концерчĕсене тата лекцисемпе докладсене те сахал мар ирттереççĕ. Пĕпрес вăтам шкулĕн учителĕ, политикăлла тата наукăлла пĕлÿсем саракан обществăн действительнăй членĕ Н. М. Яковлев юлташ çак кунсенче кунта КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен доклад туса панă.

Клубри драма кружокĕ кăçал хăйĕн репертуарне пысăклатнă. Пĕр актлă пилĕк пьеса вылясa панă. Художествăлла пултарулăх кружокĕн ĕçне баянист В. Тарасов, аккордеонист Д. Федоров (иккĕшĕ те шофер) тата ытти юлташсем те хутшăнаççĕ. Клуба килекенсем çавăн пекех бильярдла, домиnолла, шашкăлла, шахматла выляма, хаçат-журнал, кĕнеке вулама пултараççĕ. Клуб çумĕнчех библиотека тата вуласа лармалли зал пур.

Çак кунсенче клуба татах та пысăклатса, фойе, кино билечĕ сутмалли, буфет ĕçлемелли вырăнсем, кино будки туса лартнă.

Поселок витĕр иртекен тĕп çул хĕрринче—автомобиль çулĕн диспетчерскийĕ. Унпа хирĕçех автомобиль паркĕ вырнаçнă. Çак кунсенче парк тавра çĕнĕ карта тытса тухрĕç.—Çĕнĕ поселокра пурте çĕнĕ те илемлĕ пулмалла,—теççĕ кунта пурăнакансем.

Çак поселокра та пирĕн пĕтĕм çĕршыври пек, ĕçре мухтава тухнă çынсем пур. Вĕсен ячĕсене эпир «Хисеп хăминчи» çинче те, «Хисеп кĕнекисем» çинче те кур пулатпăр. Вĕсем çинчен пире рабочисем хăйсемех лайăх каласа параççĕ. Чернореченски поселок çынни—Федор Кутузов юлташăн ячĕ республикипех паллă ят пулса тăчĕ. Ун ятне юлашки тăватă çул хушшинче кашни çулах Пĕпрес вăрманпромхозĕн «Хисеп кĕнеки» çине кĕртеççĕ. Вăл нормăна пĕрмаях ирттерсе тултарать, кунпа пĕрлех хăйĕн машинине те вăйлă шăрçине сыхланă пек сыхласа усрать. Вăл хăйне çирĕплетсе панă автомашинăна пĕрре те тĕпрен юсаттармасăр 114 пин километр çÿренĕ. Çакна май укçа-тенкĕ нумай перекетлесе хăварнă. Кутузов юлташ халĕ те çав машинăпах йывăç турттарать. Тĕплĕ юсаса панă машинăпа вăл татах 100 пин километр çÿреме сăмах панă.

Нумаях та пулмасть вăрман промышленноçĕнче нумай çул хушши тата тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн А. Логушев бульдозериста, Н. Банзаренко, К. Ашпатов, И. Мальчиков, А. Новиков, Н. Овчĕнков, Н. Поголов шоферсене тата ыттисене те орденсемпе медальсем панă.

Пуян тата телейлĕ те савăнăçлă пурнăççĕ поселок çыннисем. Нумайăшĕн килĕсенче велосипед, хуткупăс е ытти музыка инструменчĕ пур. Кăç пулать. Рабочисен килĕсенче Ильич лампиcем çутăлаççĕ. Тин çеç ĕçрен таврăннă рабочисемпе мастерсем радио тăрăх паракан передачăсене итлеме пуçлаççĕ. Поселокра кашни киле тенĕ пекех радио кĕртнĕ. Хăшпĕрисен тата радиоприемниксем, библиотекăсем пур.

Н. ПАВЛОВ, Т. МАЙОРОВ.

Пĕпрес районĕ.

Редактор [illegible] М. [illegible]

ШУПАШКАРТИ [illegible] РЕСПУБЛИКĂРИ ЭК[illegible] ÇИНЧЕ [illegible]

Австрире ÿкер[illegible]

„ФРАНЦ ШУБ[illegible]

ятлă çĕнĕ илемлĕ фил[illegible] пуçлаççĕ.

Фильма «Венфильм» [illegible] фильм» 1953 çулта ÿкер[illegible]

Т Е А Т[illegible]

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТ[illegible] брĕн 5-мĕшĕнче вырăсла [illegible] бовь на рассвете». [illegible] вырăсла спектакльсем: [illegible] зывая фамилия», [illegible] рассвете».

Кăнтăрлахи спектакль 1[illegible] не—19 сехет те 30 минут[illegible]

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔН[illegible] 6-мĕшĕнче кăнтăрла [illegible] дель славы».

Кăнтăрлахи спектакль 1[illegible] не—19 сехет те 30 минут[illegible]

К И Н [illegible]

«УДАРНИК»—декабрĕн [illegible] забываемый 1919 год»

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: Шупашкар хули, Володарский ур., 5. Пом. печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—1-17, ответлă секретарь—[illegible], секретариат—3-54, промышленность пайĕ—3-74, информаци пайĕ—[illegible], парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсем пайĕ—[illegible], пропаганда пайĕ—3-71, хуçалăх пайĕ—3-87, культура пайĕ—[illegible]-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусем пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00253 Типографи № 1 Министерстви культуры Чувашской АССР. Заказ № [illegible]